*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

# ХРЕСЧЕН САССИ

15 (2528) №
Хакĕ ирĕклĕ
Эрнере икĕ хут тухать

2015
март
пуш 4
ЮНКУН

1991 çулхи апрелĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

ÇУРАКИ



## Ака-суха ирттерме – 1,8 млрд тенкĕ

Чăваш Енре çурхи ака-суха ирттерме 1,8 млрд тенкĕ кирлĕ пулать. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан ку 400 млн тенкĕ ытларах. Минерал удобренийĕсем, саппас пайĕсем, ўсен-тăрана хўтĕлемелли хатĕрсем пĕлтĕрхинчен самай хакланса кайнипе хуçалăхсем укçи-тенкине перекетлеме тăрăшаççĕ, туянсах каймаççĕ. Аграрисем çурхи ĕçсем ирттерме кредит илме тăхтаççĕ. Февралĕн 25-мĕшĕ тĕлне хуçалăхсем 8 млн тенкĕлĕх вăрах вăхăтлăх кредит илнĕ е иртнĕ çулхин 75 процентĕ. Тĕп банк процент ставкине чакарма йышăнни лару-тăрăва улăштарма пулăшасса шанаççĕ министерствăра. Республикăри хăш-пĕр хуçалăх (ун пеккисем вара 30-35 процент тарах) банкран кивçен илмесĕр хăйсен вăйĕпе кăна çурхи ĕçсем ирттерейĕмĕ. Çавăнпа ведомствăра кашни предприятипех ыйтăва уйрăмшарăн пăхса тухасшăн.

Кăçал аграрисене патшалăх 2,23 млрд тенкĕ парса пулăшма палăртнă. Кăтарту иртнĕ çулхинчен 8 процент пĕчĕкрех. Хальхи вăхăтра ялхуçалăхне аталантарма 200 млн тенкĕ уйăрнă.

ЧР Ялхуçалăх министерствин кăтартăвĕсемпе килĕшўллĕн кăçал республикăра 565 пин гектар çĕре сухаласа акса хăвармалла (2014 çулхин 101,1 процентĕ). Пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсем – 49,7, çĕрулми – 6,4, пахчаçимĕç – 0,8 тата ытти 43 процент йышăнмалла.

Çĕрулми – 681 пин тонна (2014 çулхинчен 17,3 процент ытларах), тырă 580 пин тонна (4,6 процент) пуçтарса илме палăртаççĕ.

Пĕлтĕр кĕрхи культурăсене 89,5 пин гектар çинче акса хăварнă. Хальлĕхе вĕсем йĕркеллех хĕл каçнине пĕлтереççĕ специалистсем.

### Паха вăрлăх – пысăк тухăç

Раççей ялхуçалăх центрĕн Чăваш Енри филиалĕ пĕлтернĕ тăрăх – мартăн 1-мĕшĕ тĕлне республикăри хуçалăхсем пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши çурхи культурăсен вăрлăхне 49 пин тонна (палăртнин 103 процентĕ) хывнă. Вĕсен 48,8 пин тоннине тĕрĕсленĕ ĕнтĕ. Çав шутран кондицие ларнă вăрлăх – 36 пин тонна. Çĕрпў (кондициллĕ вăрлăх 91 процент), Куславкка (85), Шупашкар (84) районĕсенче акма вăрлăх хатĕрлессипе лайăх ĕçлеççĕ. Республикăра ку енĕпе 92 звено йĕркеленĕ.

Хăш-пĕр районта вара элита вăрлăх кўрсе килеймен-ха. Йĕпреç, Вăрмар тăрăхĕсенче те вăл сахалрах.

Нумай çул ўсекен курăксен вăрлăхне 134 тонна (63 процент) янтăланă. Элĕк, Патăрьел, Вăрмар, Етĕрне, Тăвай тăрăхĕсенче вăл çителĕклех. Чылай районти хуçалăхсем халĕ те вăрлăха тĕрĕслеттерме васкамаççĕ.

Çуракине хатĕрленсе республикăра пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсен тата çĕрулмин элита вăрлăхне 1150 тонна туяннă.

Февралăн 24-мĕшĕ тĕлне Чăваш Ене минерал удобренийĕ 4 367 тонна кўрсе килнĕ, çав шутра «Апат-çимĕç фончĕ» унитари предприятийĕ – 2734 тонна. Вăрнар (кирлин 62,1 процентĕ), Красноармейски (48,6), Елчĕк (45,3), Çĕмĕрле (40,8), Хĕрлĕ Чутай (35,3) районĕсенче кăна кăтарту пысăкрах. Канаш, Муркаш, Пăрачкав, Етĕрне, Тăвай, Комсомольски, Йĕпреç тăрăхĕсенче вăл çителĕксĕр.

### «Акăнмасăр пĕр лаптăк та юлмĕ»

Куславкка тăрăхĕнче ака-сухана мĕнле хатĕрленеççĕ-ха? Район администрацийĕн ялхуçалăх пайĕн специалисчĕ **Алексей АНДРЕЕВ** акă мĕн пĕлтерчĕ:

– Кăçал районта 11 пин гектар ытла çĕр сухаласа акса хăвармалла. Çав шутра пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсем – 7,5 пин, çĕрулми – 990, пахчаçимĕç – 58, ытти культура 3 пин гектар.

Пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсен вăрлăхне 2 пин тонна ытла янтăланă. Ку кирлин 112 процентĕ. Саппас пăсмасть тенĕ. Кĕрхи культурăсем хĕл каçа пĕтесси те пулкалать. Вĕсене акма та вăрлăх кирлĕ. Хальхи вăхăтра вăрлăхăн 85 процентĕ кондицие ларнă. Ăна сортлама хуçалăхсенче звеносем йĕркеленĕ. Ку ĕç малалла пырать, паха вăрлăх кулленех хушăнса пырать. 70 тонна элита вăрлăх туяннă. Çĕрулми лартмалăх çитмелле. Çĕрулмипе ĕçлекен хуçалăхсем 300 тонна элита вăрлăх туянма заявка тăратнă.

Чăн та, хаксем хăпарса кайнипе минерал удобренийĕсем, ГСМ хатĕрлессипе ĕç йывăртарах пырать. Хальлĕхе минерал удобренийĕ – 500 тонна (кирлин 30 процентĕ), ГСМ – 50 тонна (20 процент) кăна-ха.

Иртнĕ çул чылай хуçалăх çĕнĕ техника туянса юлма пултарчĕ. Тракторĕсем çителĕклĕ, ĕçлекенĕсем сахал. Çичĕ механизатор çитмест. Халĕ вĕренÿ заведенийĕсенчен вĕренсе тухакансемпе тĕлпулусем ирттеретпĕр. Çамрăксене те çĕр ĕçне явăçтарасшăн. Чăрмавсене пăхмасăрах уйра пĕр лаптăк та акăнмасăр юлмĕ.

**Лариса НИКИТИНА**

КĔСКЕН

### Субсиди виçине ўстересшĕн

Раççей Ялхуçалăх министерстви правительство хушăвĕ валли хатĕрленĕ проект тăрăх – хресченсене техника туянма паракан субсиди виçине 15 процентран 25 процента çитерме палăртнă. Ялхуçалăх техникин хăйхаклăхĕ 2014-2015 çулсенче 30 процент ытла ўснĕрен пурнăç документа çакнашкал улшăну кĕртме хистет. Субсидипе çăмăллăх виçине 25 процент таран ўстернипе пĕрлех пĕр ялхуçалăх техникишĕн тивекен субсидин чи пысăк виçи улшăннине те палăртнă.

2013-2014 çулсенче сăнанă тăрăх – Раççей Федерацийĕн субъекчĕсенче субсидипе пĕрешкел усă курмаççĕ, пĕринче уйăрнă сумма çитмест, тепринче кăштах та пулин юлать. "Çавăнпа хушу проектĕнче субсидине регионсене кăçалхи пĕрремĕш кварталта кăна уйăрма палăртнă", – тенĕ документра.

Ялхуçалăх таварĕ туса кăларакансен укçа-тенкĕпе çыхăннă йывăрлăха çăмăллатас тĕллевпе техника туяннă чух саккунпа палăртнă тĕрлĕ тўлев майĕпе усă курма пулать. Çак шутра – вексельсемпе те.

Хресченсем ыйтнипе туянмалли ялхуçалăх техникин йышне те çĕнетнĕ.

### Пĕр-пĕринчен вĕренмелле, пĕр-пĕрне пулăшмалла

Чăваш Енпе Турци Республики хушшинчи ĕçлĕ çыхăнусем çирĕпленмелле. Мускаври Турккăсен посольствинче иртнĕ презентацире пирĕн республикăри 15 организаци Турци бизнесменĕсемпе пĕр чĕлхе тупма пултарасси çинчен пĕлтернĕ. Турккăсене пирĕн патри агропромышленноç, строительство тытăмĕсем, пир-авăр производстви кăсăклантараççĕ.

Февраль вĕçĕнче чăвашсен делегацийĕ (ун йышне 23 предприятипе обществăлла организацин явапл␣ çыннисем кĕнĕ) Крым Республикинче тата Севастополь хулинче пулнă. Пĕр-пĕрин хушшинче суту-илўпе экономика, ăслăлăхпа техника тытăмĕсене аталантарма, социаллă пурнăçпа культура тĕлĕшĕнчен çыхăнăва çирĕплетме чылай килĕшў тунă.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев асăннă тăрăх – Крым Республикин ертўçисем чăвашсен ăнăçлă опычĕпе хăйсен патĕнче усă курма хаваспах кăмăл тунă. Вĕсене уйрăмах бюджет тытăмĕнчи, бюджет тăкакĕсене виçеллĕ йĕркелес ĕçри ырă тĕслĕхсем, çĕрпе, пурлăхпа тухăçлă усă курасси, халăха ĕçпе тивĕçтересси, вĕренўпе, сывлăх сыхлавĕпе çыхăннă ыйтусем кăсăклантарнă. Паянхи кун шăпах çак тытăмсенчи лару-тăру Крымра çивĕч тăрать.

**Ирина ПАВЛОВА.**

## Вăшăл-вашăлли ял тытать

***Ялти çын вăрăм ятсене килĕштермест, кĕскине, уçăмлине кăмăллать. "Валентина Петровна Петрова âçтарах пурăнать-ши?" – тесе ыйт-ха иртен-çўренрен. Хурав илтиччен самай кĕтме тивет. Ара, шухăшлама вăхăт кирлĕ. Вăшăл Вали тесен туххăмрах çул кăтартса яраççĕ. Энĕшпуçĕнче (Вăрмар районĕ) Вăшăл Валине пĕлмен çын çукпа пĕрех. Ĕçре вăшăл-вăшăл пулнăран çапла чĕнеççĕ-мĕн ăна. Тепĕр тесен вăр-вар пулмасан картиш тулли выльăх усраймăн: пилĕк ĕне, пăрусем, сурăхсем, чăх-чĕп, хур-кăвакал. Теплицăра ир пулакан хăяр йăтăнать, пахчара тухăçлă çĕрулми, темĕн мăнтăрăш кăшман тата темтепĕр çитĕнет. Тăватă гектар çĕр çинчи симĕс курăк çулла утта хывăнать. Петровсем тата мĕн ĕçпе ĕçленине йăлт асăнмарăмха: хăй вăхăтĕнче кролик та тытнă, пĕлтĕртенпе вĕлле хурчĕпе кăсăкланма тытăннă. Кил хуçи, Юрий Александрович, хальхи вăхăтра пуйăспа ларса каять те тăхăр кун иртмесĕр таврăнмасть. Проводникра тăрăшать. Мăшăрĕ яра куна килте выльăхпа иртерет тетĕр пулĕ-ха? Йăнăшатăр, вăл та ĕçре, страхлакан агент шутланать. Çынсемпе тĕл пулса калаçма та, килти хушма хуçалăха çирĕппĕн тытса пыма та ĕлкĕрет.***

7-мĕш стр. ➔

ÇАНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 4.03 | 5.03 |
|---|---|---|---|
| Температура, °С | 2–4 сехетре | –13 | –10 |
| | 14–16 сехетре | –4 | –8 |
| Юр çăвать | | – | – |
| Атмосфера пусăмĕ, мм | | 754 | 756 |

**Пурнăç таппи**

***Çирĕм çул каялла Альбина Борисовна Новикова Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Коминтерн» хуçалăха ертсе пыма тытăннă. Унтанпа шыв-шур самай юхса иртнĕ. Районта хуçалăхсем арканнă вăхăтра «Коминтерн» çĕнĕрен вăй илсе çĕкленнĕ. Паян районти ял-хуçалăх отраслĕ ун çинче тытăнса тăрать темелле. Иртнĕ çул аш-какай чĕрĕ виçепе – 611 (район тӳпин 78 проценчĕ), сĕт 2400 тонна (57 процент) туса илнĕ. Кашни ĕçлекен пуçне вăтамран 1 миллион тенкĕлĕх продукци сутнă. Акакан-сухалакан лаптăксем 2840 гектар. Çак тапхăрта çĕнĕ технологипе фермăсем хута янă, машинăпа трактор паркне çĕнетнĕ, производство объекчĕсем çĕкленĕ. Пĕлтĕр 22 миллион тенкĕлĕх инвестици хывнă, вунă çулта – 143 миллионлăх. Предприяти çулсеренех республикăра лайăххисен шутĕнче.***

***Хальхи вăхăтра хуçалăхра 101 çын ĕçлет, çав шутран 65-ĕшĕ çирĕм çул ытла. Вĕсен йышĕнче Раççей, республика шайĕнчи хисеплĕ ятсене илнисем те самай. Уйăхри ĕç укçи 16 пин тенкĕ ытларах. Унпа пĕрлех 5-шер килограмм аш параççĕ. Çулсерен ĕççыннисене тӳлевсĕр кантарма, сывлăхне çирĕплетме май тупаççĕ. «Хуçалăхăн ылтăн никĕсĕ тата тĕревĕ – ĕçлекенсем», – тет час-часах Альбина Борисовна.***



В. Филиппов сăнӳкерчĕкĕ

# Хуçалăх тĕревĕ – ĕç çынни

**ШĂПА УРЛĂ СИКСЕ КАÇАЙМĂН**

Нумаях пулмасть «Коминтерн» хуçалăх çитĕнӳ çулĕпе утма пуçланăранпа çирĕм çул çитнине анлă палăртрĕç, утса тухнă çул-йĕре тишкерчĕç.

– Унччен «Коминтерна» эпĕ те ертсе пынă. Хĕрлĕ Чутай райĕçтăвкомĕн председательне суйласан ирĕксĕрех унтан кайма тиврĕ. Шел, çĕнĕ ертӳçĕ çирĕп хуçалăха самантрах юхăнтарса ячĕ. 1995 çулхи февральте ĕççыннисен пухăвĕнче Альбина Новиковăна ертӳçĕне суйларĕç. Районта ялхуçалăх управленийĕн пуçлăхĕнче ĕçленĕ май килĕшмерĕ вăл. Вырăнта ăна кĕтсе илейменнипе Атнарсем çӳле шăнкăравласа çăхав панă: «Коминтерна» эпĕ ямастăп иккен ăна. Куçакуçăн калаçнă хыççăн Альбина Борисовна кайма килĕшрĕ, – асаилет Юрий Николаев.

Шăпа урлă сиксе каçаймăн тенĕ. Диплом илнĕ çамрăк хĕр тăван енне канма таврăннă. Мари Республикине ĕçлеме тухса кайиччен тăванĕсене курас тенĕ-тĕр. Январĕн 7-мĕшĕнче вĕсен çурчĕ умне çăмăл машина çитсе чарăннă. Водитель хĕре хăвăртрах Атнара çитмеллине пĕлтернĕ.

– Хĕрлĕ Чутай районĕнче çуралса ӳснĕ пулин те унччен Атнар ăçта вырнаçнине пĕлмен. Унта вара уполномоченнăйсен пухăвĕ пынă иккен. «Акă сире, хуçалăх валли тĕп агроном», – манпа паллаштарчĕç пухăннисене район ертӳçисем. Кĕтмен çĕртен тăван енрех ĕçе вырнаçрăм. Тепĕр çичĕ çултан мана ертӳçĕне лартасшăн пулчĕç. Сывлăх хавшакки çине йăвантарса килĕшмерĕм. 1986 çулта каллех тапăнчĕç мана: «Ĕçлĕр, эсир пултаратăр», – теççĕ. Хирĕçлерĕм. Çултала́кран вара «Сура» хуçалăха ертсе пыма тытăнтăм, – каласа парать Альбина Борисовна.

Çапла Атнарсенчен хăтăлнă темелле ăна. Темле пăрăнсан та шăпа ăна каллех «Коминтерна» çавăрса çитернĕ.

– 90-мĕш çулсем – совет тапхăрĕ арканнă пăтрашуллă вăхăт. Татăклă хурав паричченех виçĕ кун шухăшласа çӳрерĕм, çĕрĕ-çĕрĕпе çывăраймарăм. «Çакăнта ĕмĕре ирттерме шăпа пӳрнĕ пулас мана», – тесе килĕшрĕм, – аса илет Альбина Борисовна.

**ХУÇИНЕ КУРА**

Çĕнĕ шăпăр çĕнĕлле шăлать тенĕ. Пуçлăх дисциплинăна хытарма, çирĕп ыйтма тытăнни хăратнă çынсене.

– Ĕçе тытăнсан кадрсемпе вăй хуракан специалиста чĕнтертĕм, хуçалăхăн хушусен кĕнекине ыйтрăм. «Пирĕн ун пекки çук», – патлаттарса хучĕ вăл. «Мĕнле çук?» – тĕлĕннипе хытах каласа хутăм ăна. «Килнĕ-килмен манран тем те ыйтатăр, ниçта та пулман ун пек кĕнеке», – тесе хайхи йĕрсех ячĕ. «Юрĕ, – лăплантартăм ăна, – паянтан çĕнĕлле ĕçлеме пуçлăпăр». Хайхи кĕнекене туянсан пĕрремĕш хушупа хама ĕçе илнине çырса хутăм. Иккĕмĕш хушăва ĕçри хăрушсăрлăх пирки кăлартăм, кашни специалиста вăл е ку объект çумне çирĕплетсе тухрăм. Анчах пĕри те алă пусма килĕшмест. «Кам ирĕк панă сире ун пек хушу кăларма?» – тарăхаççĕ вĕсем. Ирĕксĕрех Ĕç кодексĕпе паллаштарма тиврĕ.

Пăтăрмахсем кĕтсех тăнă. Унчченхи ертӳçĕпе хуçалăхра дисциплина пулман. Кашниех халăх пурлăхĕпе хуçаланма хăтланнă. Канмалли куна Альбина Борисовна çемйипе ирттерме шутланă. Ертӳçĕ вырăнта çуккипе усă курса е хăнăхнă йăлапа ферма заведующийĕ никампа канашламасăр хуçалăх вăкăрне пусса Шупашкара ăсатнă. «Çакна ăнсăртран урамра илтрĕм. Ирхине ĕçе тӳрех айăплине чĕнтертĕм. «Укçине кассăна хуратăп вĕт», – ним пулман пек таврăрчĕ вăл мана. «Эсир пурлăхшăн яваплă, ертӳçĕ ирĕк памасăр сирĕн ăна тĕкĕнме юрамасть», – тесе ăна ĕçрен хăтартăм. Кун хыççăн: «Ытлашшипех çирĕп, аплах юрамасть ĕнтĕ», – теме тытăнчĕç ĕçлекенсем. «Мана илсе килтĕр пулсан чăтăр», – терĕм.

– Пĕррехинче васкавлăн бухгалтеринчен документ кирлĕ пулчĕ. Ун чухне ултă бухгалтер вăй хунă, çав шутран тăваттăшĕ – аслă, иккĕшĕ ятарлă пĕлӳ илнĕскерсем. Анчах пĕри те мана хурав параймарĕ. Тĕп бухгалтера ларма килĕшекен те çук – хăраççĕ. «Ĕлĕк шăпа ярса 25 çуллăха салтака ăсатнă. Эпир те тĕп бухгалтера шăпа ярса суйлăпăр», – терĕм вĕсене.

Шăпа Анастасия Васильевна çине ӳкнĕ. Пултарулла ертӳçĕ умĕнче намăс курас мар тесе çине тăрсах тăрăшнă вăл.

– Колхозсем саланма тытăнсан эпир те йывăрлăха кĕрсе ӳкрĕмĕр. Тавар туянакансем укçа вырăнне вексельсемпе татăлни халĕ те асрах. Эпир вара вăл хутсене вырнаçтарма чупса çӳреттĕмĕр. Юрать, хăшпĕр предприяти кĕтмелле ака-суха ирттерме удобрени, вăрлăх, саппас пайĕсем паратчĕ. Пенси фончĕ умĕнчи парăм пысăк пулнипе банкран кредит илсе татрăмăр, – аса илчĕ çав вăхăтсене «Чăваш Республикин ялхуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» Анастасия Кузьмина.

– Пĕррехинче Шупашкара кайса килмелли пулчĕ. Таврăнтăм та тĕп бухгалтер куççульне юхтарса ларать. Районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕпе налук инспекторĕ сейфран документсăрах 5 пин тенкĕ илсе тухса кайнă-мĕн. Çухалса каймарăм, тепĕр кунне ирех вĕсен йĕрĕпе тухса кайрăм, ыйтăва татса патăмăр, укçана тавăрттартăм. Вăл вăхăтра хăратса укçа илме хăтланакан пайтах пулнă. Анчах хуçалăха салатма памарăмăр, – ассăн сывларĕ Альбина Новикова.

Атнарсем пултаруллă ертӳçĕпе хăйсене хăюллăрах туйнă. «Кун пек ертӳçĕпе пĕтместпĕрех», – савăннă вĕсем. Кивĕ фермăсенче ĕçлекенсем çитменрен вĕсем валли çуртйĕр туса пама тытăннă. Пĕрне Мария Багрова çемйи йышăннă.

– 1997 çулта фермăна вырнаçрăм. Йывăрччĕ ун чухне ĕçлеме: витесенче сивĕ, йĕпе, тĕттĕм. Мĕнпур ĕçе алă вĕççĕн тунă. Хальхипе танлаштарсан çĕрпе пĕлĕт пек, – тет М. Багрова. – Пирĕн çемье те икĕ хутлă уйрăм çуртра пурăнать. Пĕррехинче ертӳçĕ мана тытса чарчĕ те: «Хăвăн çуртна тумалла. Май çитнĕ таран пулăшăпăр», – терĕ. «Яла социаллă аталантарасси» программăпа, амăшĕн капиталĕпе, хуçалăх пулăшăвĕпе кермен çĕклесе лартрăмăр. Юрать, вăхăтлăх йывăрлăха чăтса ирттернĕ, пысăк укçа хыççăн аякка тухса кайман.

Чăн та, фермăра вăй хуракансен çичĕ хут та тар кăларма тивнĕ вăл вăхăтра. Укçа çителĕксĕррипе кооперативăн вылăх апачĕ туянма та укçа юлман. Ферма заведующийĕ Андрей Данилов каланă тăрăх – çитерме çуккипе апрель вĕçĕнчех ĕне вылăхсене çуллахи лагере хăваласа кайнă. Утайманнисене вара машинăпа турттарнă. Симĕс курăк шăтма пуçлани вылăхчĕрлĕхе выçса вилесрен хăтарса хăварнă.

Фермăра ĕçлекенсене хавхалантарма шалу тӳлессине çĕнĕлле йĕркеленĕ. Сăвăм кăтартăвне, вылăх ӳт хушаслăхне кура тӳлени çынсен кăмăлне те улăштарнă. Вĕсем тăрăшса, яваплăха туйса ĕçленĕ. Хуçалăха тухăçлă ертсе пынăшăн Чăваш Ен Президенчĕн алличен Тав çырăвĕпе трактор илме тивĕçнĕ.

**«КОМИНТЕРНА» КАЧЧА ТУХРĂМ»**

Çапах фермăри ĕçе-хĕле улăштармасăр пысăк çитĕнӳсем тăвайман аван ăнланнă ертӳçĕ. Алăпа суса, пăрпа сивĕтсе сутнă сĕт пысăк пахалăхпа кайман, тупăш кӳреймен. Альбина Новикова Шупашкарти сĕт завочĕпе çыхăнса пулăшу ыйтнă. Завод директорĕ Виктор Бычков сĕт пăрăхĕ вырнаçтарма подрядчик тупса панă. Вăл вара хуçалăх фермипе паллашнă хыççăн аллине сулнă кăна. Ансăр та хĕсĕк витесене сĕт пăрăхĕ вырнаçтарма çук-мĕн. Нивушлĕ ĕмĕте пăрахăçлама тивет? Кĕçех завод директорĕ «Коминтерна» шăнкăравланă. «Республикăра пысăк сортлă сĕт çитмест, сирĕн ĕне нумай, сĕт пăрăхĕ вырнаçтармаллах», – сĕннĕ Виктор Петрович. «Кампа? Подрядчиксем килĕшмерĕç. Урăх республикăра ку ĕçе тăвакан çук», – хуравланă ертӳçĕ. «Эсĕ тăрăш, туп», – каялла чакман директор. Сасартăк Альбина Борисовна Санкт-Петербургри Елена Короленкăна аса илнĕ. Нумай шутласа тăман, унпа çыхăнса хăй нушине пĕлтернĕ. Вăл вара фирмăн икĕ инженерне Чăваш Ене кăларса янă. Вĕсем пулăшнипе 150 ĕне тăмалăх витере сĕт пăрăхне вырнаçтарнă. Сĕт пăрăх тăрăх холодильника юхса кĕме тытăннă.

Çĕр пулăхĕ чакнипе тухăç та пĕчĕк пулнă. «Коминтерн» ертӳçисем пĕр фирмăна çыхăнса ĕçлеме тытăннă, специалистсене вĕренме янă.

– Пĕр çулхине чип-чипер шăтса тухнă калча сасартăк сарăхса типсе ларчĕ. Унччен маларах лаптăксене гербицит сапнăччĕ. Агрономсем тĕрлĕ культурăн гербицитне пăтраштарса янине тӳрех ăнлантăмха, анчах вĕсем айăпне йышăнмарĕç. Мĕн тумалла? Хайхи фирмăна шăнкăравласа инкек çинчен пĕлтертĕм. Паллах, хамăр йăнăшнине пытартăм. Уйсене килсе тĕрĕслерĕç, çĕр пробине илчĕç. Тăкака саплаштарасса шанманччĕ, пире вара 300 пин тенкĕ тӳлерĕç. Кун хыççăн ĕçлĕ çыхăнӳ çирĕпленчĕ кăна. Вĕсен пулăшăвĕпе уй-хир тухăçне хăпартса пытăмăр, – сăмахлать А. Новикова.

1996 çулта малтанхи хут лизингпа трактор туянса ака-сухана тухнă. Çак çул гектартан вăтамран 17 центнер тырă пуçтарса илнĕ. Хуçалăх пенсионерсене 50 килограмм ыраш, çавăн чухлех шурă çăнăх валеçсе панă. 5-6 уйăх таран пенси илеймен ватăсемшĕн чухах пулнă ку.

Икĕ пинмĕш çулсенче республикăра сыснасене хулăн айсарăмĕпе усрасси сарăлма тытăнсан ертӳçĕне те çĕнĕлĕхе пурнăçа кĕртме сĕннĕ. Анчах Атнарсем асаттесен мелĕпе мар, Европа технологийĕпе усă курма тытăннă.

– 1000 сысна вырнаçмалăх çĕнĕ ферма турăмăр. Ăна хута ярсан пĕчĕк ача пек савăнтăмăр. Пĕр пин сыснана пĕр çын пăхать. Витесенче таса, çутă, ĕçе-хĕле компьютер йĕркелесе тăрать. Пирĕншĕн чăннипех ырлăх. Кĕçех «АПК наци проекчĕ» хута кайрĕ. Çăмăллатнă кредит илсе вылăх-чĕрлĕх отраслĕне аталантарма тытăнтăмăр. Программа хуçалăха çул уçса пачĕ. Эпир иккĕленсе тăнине кура Раççей ялхуçалăх банкĕн Чăваш Енри филиалĕн ертӳçи Ирина Письменская пысăк кредитах илме хĕтĕртрĕ, васкатрĕ. «Ан хăрăр, хăвăртрах илĕр, патшалăх процент ставкине çавçавах саплаштарать», – терĕ. Çăмăллатнă кредитпа пирĕн хуçалăх республикăра пĕрремĕш усă курма тытăнчĕ. Çавна май чи пĕчĕк процентпа (çулталăкне 2-3 процент) кредит илсе юлчĕ.

Юлашки хут кредит илнĕ чухне пенсие тухнăччĕ ĕнтĕ. «Сире мĕн тума кирлĕ вăл? Хуçалăх сирĕн харпăрлăхра мар вĕт, кам валли тăватăн?» – теççĕ мана паллакансем. Ирина Письменская вара мана «Коминтерна» «качча» пачĕ. Хуçалăх валли кредит панă чухне пире, бухгалтерпа иксĕмĕре, поручительсем туса хучĕ. Халĕ парăма татма ĕçлемех тивет, – кулать ертӳçĕ.

Ĕне витинче сĕт пăрăхĕ вырнаçтарнă пулин те, витесенче çав-çавах йĕпе тăнă, çутă çитмен. Фермăра вăй хуракансем сысна пăхакансене ăмсаннă, ĕç условийĕсене лайăхлатса пама ыйтнă. Пĕррехинче Шупашкар районĕнчи «Ольдеевская» агрофирма ертӳçи Евгения Беликова Новиковăна çĕнĕ ферма кăтартма чĕнсе илнĕ. «Пăхатăп та, вĕсен вите тăрри пирĕнни пекех. Анчах мачча варрипе çутă кĕмелле тунă. Вентиляци вырнаçтарнă. Витере типĕ, çутă. Таврăнсан çĕрĕпе çывăраймарăм: «Пирĕн те çакăн пек тумалла мар-ши?» Йывăрра пулин те, ĕмĕте пурнăçа кĕртрĕмĕрех.

Ĕçлекенсем валли душевой, ĕç тумне çума ятарлă машина лартса панă. Çулла ферма территорийĕнче чечек ашкăрса ларать. Такăр çулпа пушмак та вараланмасть.

Çак тапхăрта çĕнĕ производство объекчĕсем самай çĕклесе ларнă хуçалăхра. 5 пин тонна кĕмелĕх тырă склачĕ хута кайнă. Майракаллă шултра вылăх йышĕ пĕр пинрен, сыснасен виçĕ пинрен иртнĕ.

Пĕррехинче Альбина Новиковăна телевидение чĕнтернĕ, ӳсĕм вăрттăнлăхĕпе паллаштарма ыйтнă. Вăл апла та, капла та каласа пăхнă, анчах хурав тивĕçтерменнипе журналист унран çавçавах хăпман: «Ӳсĕм тăвас тесен мĕн тумалла?» – çине çинех ыйтнă вăл. Альбина Борисовна тек чăтайман, тӳррĕн каласа хунă: «Вăрламалла мар!»

Хăй пайта курассишĕн мар, хуçалăхшăн, халăхшăн хыпса çуннипе предприятие çĕкleme пултарнă вăл. Тивĕçлĕ канăва тухсан та хуçалăх шăпи канăç памасть ăна. «Робот ĕçлекен фермăсем хута кайнине курасчĕ», – ĕмĕтне пытармасть ертӳçĕ.

– Пурнăçăмра лайăх та талантлă çынсемпе ытларах тĕлпулнăшăн шăпамма тав тăватăп, – тет Чăваш Республикин тата Раççей Федерацийĕн ялхуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, ĕç ветеранĕ Альбина Борисовна. – Вĕсем мана вутра çунма, шывра путма памĕç.

**Лариса НИКИТИНА.**

# Йĕркеллĕ водительрен пахи çук

*Экономика тĕлĕшĕнчен кăткăс тапхăрта укçа-тенкĕпе перекетлĕ усă курас ыйту çивĕчленет. Патшалăх автоинспекцине те пырса тивет çакă. Кун пирки унăн ертӳçи, полицин генерал-лейтенанчĕ Виктор НИЛОВ "Коммерсантъ" хаçата интервью панă. Унăн хуравĕсем çула машинăпа тухакан пĕлтерĕшлĕ пулнăран вĕсемпе хамăр вулакансене те паллаштаратпăр.*



**– Шалти ĕçсен министерстви бюджет укçи-тенкине перекетлес тĕлĕшпе ĕçлекенсен йышне чакарма палăртать. Экономикăри лару-тăру патшалăх автоинспекци ĕçне мĕнлерех витĕм кӳрет? Çул-йĕр çинчи хăрушсăрлăха вăйлатмалли тĕллевлĕ программăна ура хумасть-и?**

– Правительство сĕнĕвĕпе килĕшӳллĕн патшалăх заказне пурнăçлакансен пурин те хăйсен программисене улшăнусем кĕртмелле. Эпир ку тĕлĕшпе ĕçлетпĕр. Перекетлессипе çыхăннă кăткăслăх 2008-2010 çулсенче те пулнăран майсене пĕлетпĕр темелле. Программăна çĕнетнĕ чух хăш мероприяти тухăçлăраххине чухлатпăр. Укçа-тенкĕ сахалли, паллах, пурлăхпа техника никĕсне те витĕм кӳрĕ. Çак условисенче хальччен тунине çухатмасăр малалли тĕллеве пурнăçлама пушшех те кăсăклă.

**– Мĕнле мероприятисене сыхласа хăварасшăн?**

– Чи малтанах – çулсем çинче хăрушсăрлăха пăхăнса çӳрессине пропагандăлас ĕçе. Кунта ытлашши перекетлеме май çук. Халăх шухăшлавне улăштарасси питех те пĕлтерĕшлĕ. Çулсем çинче светофор, ытти кирлĕ хатĕр вырнаçтарассине уйрăмах тимлемелле. Ку ĕçре пире регионсем хушма укçапа пулăшаççĕ.

**– Руль умне ӳсĕрле ларнăшăн хыт айăплама тытăнчĕç, анчах статистика тăрăх водительсене çакă улăштармасть. Мĕншĕн?**

– Нимĕн те улшăнман темелле мар. Ӳсĕрле темиçе хут тытса чарнисен шучĕ чакнă. Пĕтĕмĕшле илсен ӳсĕр водительсен айăпĕпе пулнă инкек, чăн та, нумайланнă. Кунта çакна шута илмелле: 2013 çулхи сентябрьтенпе эпир авари тунă пур водителе те урă е ӳсĕр пулнине тĕрĕслеттерме больницăна яратпăр. Кун пек чух ӳсĕрсене ытларах тупса палăртаççĕ.

**– Ӳсĕрсемпе кĕрешме хушма мерăсем кирлĕ пек-и?**

– Профилактикăпа çыхăннă мĕнпур ĕç вăй илеймен-ха. Çулла çĕнетнĕ Уголовлă кодекс ĕçлесе каймалла. Инспектор руль умĕнче ларакан урă пулни пирки иккĕленсен ăна больницăна каймa ыйтать. Иккĕмĕш хут асăрхаттарсан та водитель килĕшмесен уголовлă явап тыттарма ирĕк пур. Çапла туни кирлĕ, мĕншĕн тесен иртнĕ çул тĕрĕслеттерме килĕшменнисен шучĕ 20 процент ӳснĕ. Кунсăр пуçне иртнĕ канашлура тăтăшах йĕркене пăсакан водительсем пирки сăмах хускатнăччĕ. Вĕсемпе те ĕçлемелле, мĕншĕн тесен шăпах унашкаллисем каярах хăрушă инкек кăтартаççĕ.

**– Ун пеккисене мĕнле явап тыттарма пултаращĕ?**

– Чи витĕмли – машинăпа çӳреме правине туртса илни. Саккун йышăнакансем çакна суйласа илĕç-и е урăх май палăртĕç-и – вăхăт кăтартĕ.

**– Виçĕ çул каялла техника тĕрĕслевĕшĕн автоинспекци ĕçченĕсем мар, страховани компанийĕсем яваплине палăртрĕç. Çак улăштару мĕн пачĕ?**

– Техника тĕрĕслевне ирттерни транспорт юсавлăхне контрольленин пĕр пайĕ кăна. Пире паян ăна кам тата мĕнле ирттерни мар, юсавлă транспорта çула кăларма услови туса парасси пăшăрхантарать. Ыйту нумай. Пассажирсене турттаракан транспортăн 60 процентĕ паян уйрăм çын харпăрлăхĕнче. Пассажирсене турттарма кам тата мĕнпе çула тухнине палăртма питех те йывăр. Юсавсăр транспорта çула кăларма май паман тытăм йĕркелемелле.

**– Раççейре светофорăн хĕрлĕ çути çуннă чух сылтăмалла пăрăнма ирĕк парĕç-и? Правительство çак ыйтăва пăхса тухса çул-йĕр правилине улшăнусем кĕртме хушнăччĕ.**

– Хушу юлнă. Эпир тĕрлĕ шухăша шута илме тăрăшатпăр. Тĕнчери çĕршывсенчен чылайăшĕнче унашкал йăла çук. Ку пуçарăвăн авторĕсен шухăшĕпе хĕрлĕ çутă çуннă чух сылтăмалла пăрăнма ирĕк пани светофорăн хушма секцине вырнаçтарнинчен йӳне ларать. Çул хĕресленнĕ вырăнта машинăсен йышне "пушатма" та пулăшать. Анчах çуран çӳрекенсен хăрушсăрлăхĕ çинчен шухăшлани курăнмасть.

**– Çĕнĕ улшăнупа инспекторсем автошкулсен пурлăхпа техника никĕсне тата вĕрентӳ вырăнĕсене тĕрĕслеççĕ. Ытла тиркевлĕ пăхнине калаççĕ. Сирĕн шухăшпа мĕнле?**

– Усал сас-хура ытларах чухне автошкулсенчен тухать. Водительсем хатĕрлекен организацисенчен чылайăшĕ улшăну çитессе пĕлсе реформăна темиçе çул каяллах хатĕрленме тытăннă. Паян вĕсем водительсене хатĕрлеме ирĕк илнĕ, ĕçлеççĕ. Урăххи пăшăрхантарать – автошкулсенчи вĕрентӳ пахалăхне никам та контрольлемест. Йĕркеллĕ водительсем хатĕрлес пулсан автошкулсен те хăйсен ĕç пахалăхĕшĕн явап тытмалла.

**– Çĕнĕлĕхе хирĕçлекенсем: "Автошкул мĕнле вĕрентни пĕлтерĕшлĕ-и вара? Экзаменсене патшалăх автоинспекцийĕ йышăнать. Хатĕрленмен çынна вăл çула кăлармĕ", – теççĕ.**

– Çапла. Анчах экзамен валли уйăрнă 40 минутра хатĕрленӳ шайне тĕрĕс хаклама кăткăс. Хамăрăн çитменлĕхсем пирки тунмастпăр, çавăнпа водительсене тата экзамен йышăнакансене хатĕрлес ĕç икĕ енлĕ пулса пымалла тетпĕр.

**– Çул çинчи инкекшĕн çуран çӳрекенсем те айăплă. Июльтен пуçласа вĕсен çутатакан япаласем вырнаçтарнă тумпа çӳремелле. Йĕркелĕхе тата мĕнле хăнăхтарма пулать вĕсене?**

– Çул урлă тĕрĕс мар каçнăран пулакан авари çĕршывра сахалланать. "Ятарласа палăртман вырăнта çул урлă каçнăшăн нимĕн те пулмĕха" тени çавах та çухалмасть. Инкеке лекекенсенчен чылайăшĕ çул-йĕр правилисене пĕлмест. Германире акă кашни ӳсĕм тапхăрĕнчи çынсемпе уйрăммăн ĕçлеççĕ. Эпир те çакна шута илесшĕн.

**– Чылай водитель руль умĕнче телефонпа калаçать, ку инкек патне илсе çитерет. Аталанакан çыхăну витĕм кӳрекен ыйтăва мĕнле татса пама пулать?**

– Технологи аталаннă май пурнăçра çĕнĕлĕх хушăнсах пырать, ăна контрольлеме йывăр. Электронлă хатĕрсемпе, гаджетсемпе нумай çын усă курать. Паян эпир вĕсене пула çул çинче мĕн чухлĕ авари пулнине калаймастпăр. Анчах шухăш-тĕллев пур. Тĕслĕхрен, ЭРА-ГЛОНАСС тытăм ĕçлесе кайсан инкек пулнă вăхăта тата вырăна тĕп-тĕрĕс палăртма пултарăпăр. Вăл вăхăтра телефонпа калаçнине те пĕлме май килĕ. Чылай çĕршывра халĕ çакнашкал тытăмпа усă кураççĕ.

# Руль умĕнче кам эсĕ? Хӳтĕлевçĕ е ...

Автомашина рулĕ умне ӳсĕрле ларакана Тăван çĕршывăн хӳтĕлевçи теме пулать-ши? Паллах, çук, мĕншĕн тесен вăл хăйĕнпе юнашар ларса пыракан пурнăçне те шута хумасть. "Атя, лар, кирлĕ вырăна илсе çитерме вăй юлнă-ха манăн. Кăшт кăна сыпнă, инçе каймалла мар вĕт", – тесе ләпплантарать тусне. Кунашкал çăмăлттайсемпе темле майпа кĕрешсен те вĕсен йышĕ чакмасть. Çултаăк пуçланнăранпа республикăри автоинспекци ĕçченĕсем урă мар пуçпа машина хăваланă 200 яхăн çынна тытса чарнă. Ӳсĕрсен айăпĕпе 10 инкек пулнă. Пĕлтĕр вĕсене пула 57 çын пурнăçран уйрăлнă. Машина рулĕ умĕнче ӳсĕр водителе асăрхасан, тархасшăн, курмăш ан тăвăр. Автоинспекци дежурнăй чаçне 24-07-70 номерпе шăнкăравласа эсир инкеке сирсе яма, айăпсăр пассажир пурнăçне çăлса хăварма пулăшатăр. Кунашкал ырă çынсем сахал мар. Республикăри патшалăх автоинспекцийĕ вĕсене чунтан тав тăвать.

Пĕр-пĕрне пулăшмасан, хӳтĕлемесен çул çинчи "вăрçа" лăпплантарма май çук. Тăван çĕршыв хӳтĕлевçисен уявĕ умĕнхи кунсенче умлăн-хыçлăн хăрушă инкек пулса иртнĕ. Февралĕн 20-мĕшĕнче Йĕпреç районĕнчи Кĕлĕмкасси çывăхĕнче кăнтăрла иртни тăватă сехет çурăра икĕ машина пĕр-пĕринпе вирлĕн çапăннă. Пирвайхи тĕрĕслевсем тăрăх – 34 çулти арçын тытса пынă Renault Loqan транспорт хирĕç килекен çул çине вирхĕнсе тухнă та ВАЗ-21124 машинăна тăрăнтарнă. Питех те вăйлă пырса çапнăран унран тимĕр-тăмăр купи кăна юлнă темелле. Руль умĕнче Йĕпреç районĕнчи шалти ĕçсен пайĕнче тăрăшнă 22 çулти çамрăк ларнă. Полици ĕçченĕ, унăн мăшăрĕ, çулталăк çурăри хĕрĕ, арăмĕн амăшĕ тата вĕсемпе пĕрле çула тухнă 20-ри хĕр мĕн пулнине сиссе ĕлкĕреймесĕрех çут тĕнчепе сывпуллашнă. Çамрăк хĕрĕн амăшне тата тепĕр машина водительне больницăна ăсатнă. Анчах 48 çулти хĕрарăм пурнăçне тухтăрсем темле тăрăшсан та çăлса хăварайман. Февралĕн 23-мĕшĕнче вăл тăна кĕреймесĕрех пурнăçран уйăрлнă.

Эрнекунхи каç 48 çулти хĕрарăмшăн та юлашки пулнă. "Çĕрпӳ-Красноармейски-Кӳлçырма-Шывпуç" автоçулпа пынă машина çуран утнă хĕрарăмпа арçын çине пырса кĕнĕ. Ку çул çинче çутă çук, тĕттĕмре утакана тӳрех асăрхама йывăр. Анчах çынсене çапса кайнă водитель хăй инкек тунине туйнах пулĕ. Шикленсе ӳкнĕрен-ши – чарăнман, тарнă. Йывăр сурана тӳсеймен хĕрарăм çавăнтах ĕмĕрлĕхех куç хупнă. Унăн юлташне больницăна леçнĕ.

Инкек вырăнĕнчен инçех мар автоинспекторсем çул хĕррине çаврăнса ӳкнĕ тиев турттармалли машинăна асăрханă. Унăн водителĕ ăнлантарнă тăрăх – вăл çул çинче выртакан çынсене асăрхама ĕлкĕрнĕ те руле питĕ хăвăрт сулахаялла пăрнă. Малалла машинăна "итлеттереймен", лешĕ çаврăнса ӳкнĕ. Юрать, водитель хăй аманман.

Лару-тăрăва тишкернĕ хыççăн çак инкеке ГАЗель (шурă тĕслĕ, 13 вырăнлă) е Фольксваген Транспортер Т5 ( кĕмĕл тĕслĕ кузовлăскер) тунă теме май пур.

Çулсен пахалăхĕ пур чухне те тивĕçтермест. Тĕттĕмре водительсем асăрхаччăр тесен хамăрăнах тăрăшмалла, тумтир çине çутатакан хатĕрсем çĕлесе лартмалла. Вĕсене кĕнеке лавккисенче, киосксенче туянма пулать.



Шупашкарта ятарлă вырăнта çул урлă каçнă хĕрарăмсенчен пĕри ним айăпсăртан леш тĕнчене ăсаннă. Февралĕн 21-мĕшĕнче Орлов урамĕнче каçхине 6 сехет иртсен пулнă ку инкек. Икĕ хĕрарăм çул урлă каçнă вăхăтра машинăпа çӳреме вĕрентнĕ чух усă куракан Лада Калина пысăк хăвăртлăхпа вирхĕнсе тухнă. Руль умĕнче ларнă 53 çулти инструктор хĕрарăмсене ытла та кая юлса асăрханă иккен. Опытлă водитель машинăна чарма ĕлкĕреймен. Йывăр сурансене пула пĕр хĕрарăм тӳрех пурнăçпа сывпуллашнă, теприне реанимаци уйрăмне леçнĕ.

Машинăпа çӳреме вĕрентекен преподаватель "Сова" пĕрлешӳре ĕçлет-мĕн. Водитель стажĕ пĕчĕк мар – 30 çула яхăн, анчах иртнĕ çулта çул-йĕр правилине вунă хутчен пăснă.

◆ ЫРĂ ТĔСЛĔХ

# Чĕнтерсен питĕ тĕлĕннĕ

Штрафланипе, явап тыттарнипе кăна çулсем çинче йĕрке тăваймăн. Çакна Чăваш Енри автоинспекторсем шута хумаççĕ мар, мĕн пĕчĕкрен йĕркене хăнăхтарас тĕлĕшпе ача сачĕсем таранах тухса çӳреççĕ. Ытти регионсенчи ĕçтешсен опычĕпе паллашни те ытлашши мар теççĕ.

Ингушетире акă Тăван çĕршыв хӳтĕлевçисен кунне халалласа пĕрремĕш хут çĕнĕ мероприяти ирттернĕ. Хăйсен регионĕнче штрафсăр, аварисĕр çӳрекен водительсен йышне тĕплĕ тĕрĕсленĕ. Юлашкинчен 50 çул инкек тумасăр çӳрекен виçĕ водителе суйласа илнĕ те тĕлпулăва чĕннĕ. Лешсем йыхравăн сăлтавне пĕлменрен малтанах питĕ тĕлĕннĕ. Вырăнти патшалăх автоинспекци ертӳçи вĕсене çул çинчи йĕркешĕн, типтерлĕхшĕн тав тунă, ятарлă дипломпа чысланă, асăнмалăх парнепе хавхалантарнă.

Хакасири Черногорск хулинче "Çул урлă тирпейлĕ каçакан" ятпа акци ирттереççĕ. Шкул ачи çул урлă тĕрĕс каçнине курса çамрăк инспекторсем вĕсене ырă сăмахпа хавхалантараççĕ тата парне вырăнне медальпе канфет параççĕ. Çапла пĕр кунта хулари лицейра вĕренекен 66 ача çулйĕр правилипе тĕрĕс усă курнăшăн çакнашкал парнене тивĕçнĕ. Шкулти психологсен шухăшĕпе çакнашкал меслет усса каймалла, тепрехинче çул урлă каçнă чухне ача тĕрĕслĕхшĕн хăйне хавхалантарнине аса илет те йĕркене пăснасть.

**Страницăна Ирина НИКИТИНА хатĕрленĕ.**

Аслă ăру

# Çĕр çула çитетĕп тесе шухăшламан

**Канаш районĕнчи Çĕнĕ Шелттемри Анна Алексеевна Шатова июньте 100 çул тултарать. Ĕмĕрирттересси ĕшне витĕр тухасси мар. Кун-çулĕнче тем те курма тивнĕ унăн: репресси, выçлăх, вăрçă... Ĕç ветеранĕ, тыл ĕçченĕ тата вăрçă участникĕ вутра та çунман, шывра та путман.**

### Тăван килĕн тĕтĕмĕ те пылак

– Анна Васильевна вăрман хĕрринче пурăнать, шыраса тупайăр-ши? – тесе Çĕнĕ Шелттемри Таисия Павлова библиотекарь çул кăтартма килĕшрĕ.

Аслă урамăн икĕ енĕпе вырнаçнă чаплă керменсене тĕлĕнсе те савăнса сăнатăп: юхăннă, хупăнса ларакан пÿрт курăнмасть. Ялтан тухнă май такăр çултан пăрăнса ансăр сукмак çине кусрăмăр. Ăнсăртран айккинелле пусса юр ăшне кĕрсе ÿкесрен асăрханса утатпăр.

– Ĕлĕкрех кунта колхозăн сад пахчи кашласа ларнă. Улма-çырла йăтăнса пулатчĕ. Шел, хуçалăх арканса пахча та пĕтрĕ, – çаралса юлнă лаптăка тĕллесе кăтартрĕ Таисия Васильевна.

– Шатовсемшĕн пĕртен-пĕр çул çак ансăр сукмак кăна-им? – ыйтатăп унран.

– Çулне тасатсах тăраканччĕ-ха, юрĕ çусах тăрать те ĕлкĕреймеççĕ пулĕ, – хуравларĕ вăл.

Вăрман хĕрринче тăлăххăн ларакан йывăç çурта уйăрса илме те йывăр, хура вăрманпа ыталашнăн ларать. Çурт умĕнчи юра тап-таса хырса тасатнă. Çенĕк умне пысăк йывăç кĕреçе тайăнтарнă. Ахăртнех, хуçи тин кăна ĕçне вĕçленĕ – кăпăшка юр ура йĕрне хуплайман-ха. Пăлтăрти шăв-шава илтсе типтерлĕ тăхăннă çÿлĕрех хĕрарăм тухрĕ.

– Килĕрех-килĕр, – ăшшăн йыхравларĕ кĕтмен хăнасене Вера Николаевна, Анна Алексеевнăн аслă хĕрĕ. Хулара ĕçлесе пурăннăскер темиçе çул каяллах амăшне пăхма яла куçнă, вăрман хуçалăхне ĕçе вырнаçнă. Тивĕçлĕ канăва тухсан та хулана кайман.

Пĕчĕк хуранăн пăтти тутлă тенĕ. Пысăк мар çуртра ăшă, хăтлă. Тин хутса кăларнă кăмакаран вĕри сапать. Çапла, халĕ те кăмакапах ăшăнаççĕ, шывне те çăлран кÿреççĕ Шатовсем.

– Кăмакине 80-мĕш çулсенчех Митюк пичче туса панăччĕ. Алли ăстаччĕ çав унăн. Унтанпа çирĕм çул иртрĕ, хăй те тахçанах çĕре кĕнĕ. Кăмака вара паян кунччен пире ăшăтать, хуçине манма памасть, – сăмахлать Верук аппа.

Анна Алексеевна шалти пÿлĕмре тĕслĕ телевизор пăхса ларать. Хăлхи япăхрах илтет пулин те, сенкер экран умĕнчен хăпмасть. Ăна валли юриех çемçе кресло лартса панă. Çулла вăл выльăх-чĕрлĕх патне тухкаласа кĕнине, картишĕнче уçăлса ларма юратнине пĕлтĕмĕр. Çемье ĕмĕртен картиш тулли выльăх тытнă. Вăрманта ĕнесене çÿретме, апат хатĕрлеме ирĕклĕрех.

– Кĕр енне ĕнене сутрăм-ха. Ял кĕтĕвĕпе çÿретчĕ. Юлашки вăхăтра унта 14 ĕне кăна юлчĕ. Кĕтĕве кайма çын шыраса хăшкăлтăм та тарăхнипе сутса ятăм. Анне çакăншăн хурланчĕ: «Ĕне сутса пурнăça салататăр», – тесе ятларĕ мана. Хам та ватăлсах пыратăп-çке, пĕччен йывăртарах. Çапах витене пушă тытмастăп, вăкăрсем, чăх-чĕп пур.

– Вăрманта хăвăра кăна пурăнма шиклĕ мар-и? Яла, çынсем çывăхнерех куçас килмест-и?

– Çĕнĕ Шелттемре çурт пур-ха, ăна юсаса çĕнетнĕ хыççăн газ та кĕртрĕмĕр. Анчах анне ĕмĕрне вăрманта, çак çуртра ирттернĕ хыççăн мĕнле пăрахса тухса кайĕ? Хамăн та вăрманти уçă сывлăша, лăпкăлăха хăнăхнă хыççăн уйрăлас килмест. Ачалăхăм çак çуртрах иртрĕ, кашни япала чуна çывăх. Лăпкă кунта, алăка питĕрмесен те кĕрсе вăрлакан пулмĕ. Ачасем, мăнуксем килсех тăраççĕ, пулăшаççĕ. Тăван кĕтесе нимĕнле хăтлăхпа та улăштараймăн. Пĕррехинче Полина йăмăкăм ăна хăнана илсе кайрĕ. Ют çĕрте çывăрас килменнипе анне çил-тăманлă çанталăкра, çурçĕрте хăйне киле машинăпа ăсатарнă. Çавăнтанпа ăна хăнана илсе кайма та хăраççĕ, – кулса аса илет Вера аппа.

### Çăварни эрнинче – урама

Анна Алексеевна Шатова (хĕр чухнехи хушамачĕ – Владимирова) Комсомольски районĕнчи Кивĕ Сĕнтĕр ялĕнче 1915 çулхи июнĕн 12-мĕшĕнче çуралнă. Унăн ашшĕ, Алексей Владимирович, ĕçчен пулнă. Çемьере çичĕ ача ÿснĕ, пилĕк стеналлă çурт çĕклесе лартнă, икĕ лаша, ĕнесем, ытти выльăх тытнă. Амăшĕ, Елена Семеновна, Кĕçĕн Каçалтан качча килнĕ. Йышлă çемье шăкăл-шăкăл килĕштерсе пурăннă.

30-мĕш çулсенче колхозсем йĕркелеме пуçланнă. Ура çинче çирĕп тăракан çемье пĕрлешÿллĕ хуçалăха кĕме васкаман. Кил хуçи, Алексей Владимиров, Турра ĕненнĕ, чиркÿ йĕркине çирĕп пăхăнса пурăннă. Çакă та халăх хыççăн утма чăрмантарнă пулас. Колхоза кĕменнипе çемье çичĕ хут тар тăкса тупнă тупăша пысăк налук çăтса тăнă. Тата тăрăшарах ĕçленĕ вĕсем. Ачисене пĕчĕкрен ĕçе явăçтарнă. Анчах кĕвĕç чунлă çынсен курайманлăхĕ çемьен лăпкă пурнăçне чăл-пар арканă, çап-çара тăратса хăварнă.

1934 çулхи февральте Владимировсен килне синкер килсе çапнă. Парăмсене тÿлесе татман тесе халăх тăшманĕ шутне кĕртнĕ. Ашшĕне – Тулăри, амăшне Улатăрти тĕрмене ăсатнă. Анна Алексеевна çав кунсене куççуль витĕр асаилет:

– Çăварни эрни. Пÿрте хамăр ялти тата палламан çынсем кĕрсе тăчĕç те пире, ачасене, килтен хăваласа кăларса ячĕç. Хĕл варринче кĕпе вĕççĕн урама тухса тăтăмăр. Пире нимĕн те илтермерĕç. Шăнса кÿтрĕмĕр, мунчана та кĕртмерĕç. Нушине самаях чăтрăмăр. Ял çыннисем кăна мар, тăвансем те хăйсене тытса каясран шикленсе пире кĕртме хăранă. Ĕçе те илмеççĕ, ыйткаласа çÿренĕ. Юрать, аттепе пĕртăван аппăшĕ хĕл каçма кĕртрĕ. Витене пăсса кайрĕç те выртса юлнă улăмран çырмара хÿшĕ туса çу каçрăмăр. Пирĕн çуртран шкул туса хучĕç. Кăнтăрла унта ачасем вĕренетчĕç. Çĕрле эпир çывăрма кĕреттĕмĕр. Кун çутăлсанах урама тухса кайнă.



Анна ашшĕ тĕрмерен Сталин ячĕпе Мускава çыру çырса янă. Вăл тĕрмере те писарь пулса ĕçленĕ, çырулăха аван пĕлнĕ. Çакă çемьене выçлăхран, вилĕмрен хăтарса хăварнă. Çулталăкран ашшĕне, унтан амăшне тĕрмерен хăтарнă. Тăван тăрăха таврăнсан вĕсен пурăнма кĕтес пулман.

– Анне, шăллăмпа йăмăк кÿршĕсен пĕчĕк мунчинче пурăнкаларĕç. Аппапа иксĕмĕр ăста ĕç пур çавăнта тара кĕнĕ. Колхоза та тÿрех кĕртмерĕç пире. Икĕ çултан кăна аппапа иксĕмĕре колхоза илчĕç. Аттепе аннене тĕрмере ларнăран-и, çав-çавах илмерĕç. Вĕсем Канашри элеваторта ĕçлерĕç. Ĕçе çулла çуран çÿренĕ, хĕлле хваттерте пурăннă.

Йывăрлăх та Владимировсене çапса хуçайман. Кил хуçи сунара çÿресе тискер чĕрчунсем тытма пуçланă. Вĕсене сутса укçа тунă. Унтан Янкăлч разъездĕнче шпалсем тунă. Пĕрле Аннăна та ĕçлеме илсе кайнă. Хĕр чăрăшсене туратран тасатма пулăшнă. Пус çумне пус хушса çемье каллех çĕнĕ çурт çĕклесе лартнă.

– Юрать, хамăра пурăнмалăх кĕтес, çимелĕх çăкăр турăмăр. Çапла майĕпен çын шутне кĕтĕмĕр, – асаилет Анна Алексеевна.

### «Турă çырнă чухлĕ пурăнасчĕ»

Пурнăç йĕркеленме пуçланă кăна Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçланнă. 1942-1943 çулсенче Аннана ытти вун-вун çамрăкпа пĕрле Калинин облаçне торф кăларма яраççĕ.

– Çамрăксем нумайччĕ. Пурте тенĕ пекех хĕрсем, çамрăк арăмсем. Икĕ метр тарăнăшĕнчен торф кăлараттăмăр. Баракра пурăнаттăмăр, кунне 400 грамм çăкăр паратчĕç. Çулла вĕлтĕрен, ытти чухне купăста яшки пĕçерсе çитернĕ. Никам та нăйкăшман. Юлашкинчен веçех çĕтĕлсе пĕтрĕмĕр, саплăк çине саплăк. Çĕтĕк чăлха кунчисене сÿтсе кĕпе пекки те туса тăхăннă. Эй, мĕн кăна тÿсмерĕмĕрши? Япаласем юрăхсăра тухрĕç. Киле аран-аран таврăнтăмăр. Юр та çунăччĕ ун чухне. Киле çитсен тÿрех лавккана кайрăм, мунча кĕрсе канма та ĕлкĕрейменччĕ. Урамра мана курчĕç те вăрман касма кăларса ячĕç. Кайран – çул тума. Пĕр лăш канмасăр, выçăллăтутăллă ĕçленĕ. Ун чухне пурте ĕçленĕ çав, – ассăн сывлать ветеран.

1947 çулта хĕр кÿршĕ каччипе, Николай Ивановичпа, пĕрлешсе çемье çавăрнă. Виçĕ ача çуратса ÿстернĕ вĕсем. Анчах пĕр хĕрĕ пĕчĕклех чирлесе çĕре кĕнĕ. Асли, Вера, Шупашкарти кооператив техникумĕнчен вĕренсе тухнă. Полина – бухгалтер. Анна Алексеевнăн 4 мăнукпа 7 кĕçĕн мăнук.

– Аннем хăй тĕлленех вулама-çырма вĕреннĕ. Çапах шкула çÿрейменшĕн питĕ пăшăрханатчĕ, – калаçăва хутшăнать Вера Николаевна. – Пире те çавăнпах вĕрентме тăрăшрĕ.

Анна Алексеевнăн мăшăрĕ, Николай Иванович, вăрçă участникĕ. 1940 çулта çара кайнă. Çапăçусенче паттăрлăхпа палăрнăшăн ăна «За боевые заслуги», «За победу над Германией» медальсемпе ытти награда парса чысланă. Вăрçăран таврăнсан колхозра бригадирта, председательте ĕçленĕ. Унтан 25 çул Комсомольски вăрманлăхĕнче лесникра тăрăшнă. Лесникра ĕçлеме пуçласан вăл Канаш районĕнчи Çĕнĕ Шелттеме куçса килнĕ. Варман хĕрринче пÿрт туса лартнă. Паянхи кун та çак çуртра çемье вучахне сÿнме памаççĕ Шатовсем. Çĕнĕ Шелттемре Анна Алексеевна колхозра улма-çырла пахчинче вăй хунă. Хуçалăх пысăк тупăш илнĕ. Çырла, панулми туса илсе бригада районта палăрнă. Тăрăшуллă ĕçленĕшĕн ăна хаклă парнесемпе, Хисеп грамотисемпе чысланă.

100 çула çывхаракан Анна Алексеевна хăйне аван туять, çынпа тарават, çĕршыври лару-тăрупа кăсăкланать, хаçат-журнал вулать. Çичĕ пĕртăванран пĕччен юлнă вăл.

– Хăлхапа куç япăхрах илтме-курма пуçларĕç, вăй-халăм чакать. Йывăр чир-чĕр аптăратманни савăнтарать. Халĕ пурнăç лайăх, анчах ватăлтăм çав, – тет ĕçпе вăрçă ветеранĕ. – Çак çула çитетĕп тесе шутламан. Курăк яшки те пайтах çинĕ. Халĕ те тиркесе тăмастăп, мĕн пур – çавна çиетĕп, эрех-сăра кăна ĕçместĕп. Турă çырнă чухлĕ пурăнасчĕха. Тавтапуçах Верăна, ачасене мана лайăх пăхнăшăн. Турă пиллетĕрччĕ вĕсене.

«Татах килĕр», – ăшшăн ăсатрĕ пире кинемей.

100 çулхи юбилейне килме шантарса каллех ансăр сукмакпа çула тухатпăр. Хальхинче тарăн юртан хăрамасăр хавхаланса, ывăннине туймасăр утрăмăр. Ырă та ăшă кăмăллă кинемей пире вăй-хăват хушса ячĕ тейĕн.

**Лариса НИКИТИНА.**
**Автор сăнÿкерчĕкĕ.**

# «Ÿркенмесен пурăнма пулать»

Элĕк районĕнчи Шĕмшеш ял тăрăхĕнче ĕне выльăх усракансемпе кăсăклантăм. «Нина Васильевна Ивановăн сумалли çеç тăваттă, – терĕ Светлана Алдыкина ĕçе васкакан хĕрарăма чарса. «Хăвăн та тăваттăçке», – сыпăнчĕ калаçу. «Çук, пĕрне сутрăмăр», – пулчĕ хурав.

Калаçнă май ял тăрăхĕнче 5 ĕне усракан пуррине те пĕлтĕмĕр. Ку вăл – Прашкушкăньри Ирина Михайлова. Çак ялти Марина Удиванова çемйи те чылай выльăх тытать.

«Выльăх усрамасан кил картинче темĕн çитмест пек, – калаçăва пуçларĕ Нина Иванова. – Ĕнесене алăпах сăватпăр. Ирина хĕрĕм аппарат туянасси пирки сăмах хускатрĕ пĕринче. Хальлĕхе хам аппарат терĕм».

Выльăх-чĕрлĕхе юратасси çамрăкранах пырать унăн. Вăл 29 çул вырăнти фермăра дояркăра ĕçленĕ. Унтанах пенсие тухнă. Кашни çулах килĕнче картиш тулли чăх-чĕп, выльăх тытнăскер халĕ те алă усса лармасть. Тăватă ĕнене пăхма çăмăл мар пулмасть. Кунĕпех вĕсен умĕнче «ташлама» тивет. Çапах та пуçне усмасть вăл. «Хăнăхнă ĕç ывăнтармасть», – терĕ çеç. Патшалăха паракан сĕт хакĕ кăна тивĕçтермест ял халăхне. «Минерал шывĕ чухлĕ те тăмасть. Çитменнине унăн хакĕ кашни ялта тĕрлĕрен. Акă эпир пĕр литр сĕте 18 тенкĕпе паратпăр. Таватсем – 19, Чăваш Сурăмсем – 20 тенкĕпе», – калаçăва хутшăнчĕ культура çуртне пуханнă ял-йыш.

«Хĕл хырăмĕ пысăк» тени те тĕрĕсех. Хăшĕ-пĕри выльăх апачĕ çитменрен халĕ те утă туянать. Паян 200 кг таякан тюк – 700 тенкĕ. Ĕнешĕн пĕр тĕрке утă пĕр-ик çăварлăх çеç. Ара, пĕр ĕнене хĕл каçарма 3 тонна утă кирлине ахальтен каламаççĕ халăхра. «Тăкаклă пулсан та выльăха урама кăларса ярайман», – сыпăнтарчĕ калаçăва Нина Васильевна.

Мăшăрĕ вилнĕренпе сакăр çул иртнĕ. Унтанпа кил-çуртне хăй тытса пырать вăл. Ывăлĕпе хĕрĕ те хăйĕн çумĕнчех. Пысăк ĕçсене яланах пĕрле пурнăçлаççĕ. Çăва тухсан кĕтÿ черетне каясси те пĕр ĕç. Пĕр кун мар, тăватă кун хĕвел çинче пиçĕхмелле.

Сĕт хакĕ пĕчĕк пулнăран çамрăксем ĕне выльăх тытма пăрахнине каларĕç. Ватăсен те вăй-халĕ чакать. Çапла майпа кĕтÿ сайраланать.

Ивановсем кунсеренех 40 литр сĕт параççĕ патшалăха. Тупăш нумаях мар пулсан та пурнăça саплаштарма вăй-хал çитереççĕ вĕсем. «Ÿркенмесен ялта та пурăнма пулать. Выльăх-чĕрлĕх тытмасан нумай çывăрма тивет», – шÿтлерĕ Нина Васильевна. Чăн-чăн пурнăç çыннин ыйхи те шăпчăкăнни евĕр пулĕ. Ахальтен мар вăл клубра тирпейлÿçĕре те вăй хурать, вырăнти ансамбле çÿреме те вăхăт тупать.

**Валентина ПЕТРОВА.**

# Пĕр шăпаллисем

**Элĕк районĕнчи Шĕмшеш ялĕнчи ваттисен çуртĕнче халĕ сакăр кинемей пурăнать. «Пурте сăпайлă, ĕçчен, сăра-эрехпе иртĕхмен ватăсем, – пурне те пĕр пек хак пачĕ Анна Чернова социаллă ĕçчен. – Шел те, пĕри вырăнпах выртать, ыттисем ерипен çÿреççĕ».**

**Ватăсене пĕр шăпа пĕрлештернине пĕлтĕм: вĕсенчен пĕри çеç качча кайнă, анчах унăн та ачи-пăчи çук. Ыттисем çемье çавăрман, тĕпренчĕкĕсене утьăкка сиктермен. Çулсем иртнĕçемĕн вĕсем пĕччен тăрса юлнă. Пулăшу ыйтса ваттисен çуртне пынă. Кĕлеткере вăй-хал пур чухне канмасăр ĕçленĕ.**



*Мария Прокопьевăпа Валентина Миронова*

### Хуйхă пĕччен çÿремест

Асăннă районти Туçи Шĕмшеш ялĕнче кун-çулне ĕмĕрленĕ Мария Прокопьева та паян çакăнта пурăнать. 30 çула яхăн вырăнти колхозра тăрăшнă вăл. Хастар хĕрарăм хăй вăхăтĕнче ВДНХа медальне, Ленин орденне илме тивĕçнĕ. 86 çулти кинемей ăстăнпа çирĕп, иртнĕ пурнăçне лайăх астăвать. Паллах, пулни-иртнине асаилме çăмăл пулмарĕ ăна. Шывланнă куççульне тем пек пытарас тесен те пытараймарĕ. Вăл юхрĕ те юхрĕ...

Нумай ачаллă çемьере çуралса ÿснĕ Марье аппа. Тĕрлĕ чир-чĕре пула пĕртăвансем вилнĕ, çемьере вăл ачасенчен пĕчченех çитĕннĕ. Ашшĕ те çамрăклах çĕре кĕнĕ. 1937 çулта суйлава кайманшăн амăшне тĕрмене хупнă, çурт-йĕрне туртса илнĕ. Саккăрти Марье ял çинче ÿснĕ. 1945 çулта амăшĕ яла таврăннă. Анчах телей нумая пыман. Элеке пула тепĕр тăватă çултан ăна каллех тытса кайнă. Хальхинче Красноярск крайне ссылкăна янă. Ĕçчен чăваш хĕрарăмĕ хĕрне укça та ярса панă каярах. Унпа вăл пăру туяннă.

Ссылкăна пусĕпех, таврăнмалла мар янă пулсан та вăл Сталин вилнĕ хыççăн тепĕр çултан тăван тăрăха çаврăнса çитнĕ. Хĕрĕпе кивĕ çурт туянса пурăнма пуçланă. Каярахпа хăйсем пÿрт лартма та мехел çитернĕ. Вăл вăхăтра Мария Прокопьевна бригадирта ĕçленĕ. Хастарскере ачасем те кăмăлланă. «Эпĕ те унăн бригадинче вăй хунă, – пирĕн калаçăва хутшăнчĕ Анна Чернова. – Ача-пăча юрататчĕ ăна. Йĕтĕм çинче юрла-юрла ĕçлеттĕмĕр. Çамрăк ăрăва хавхалантарма та пĕлетчĕ вăл. Ĕçси пĕтсен Шупашкара цирка е театра илсе каятчĕ. Çамрăксемпе йывăç лартнисем те куç умĕнчех. Халĕ вĕсем çитĕнчĕç, тÿпенелле кармашаççĕ, тавралăха илем кÿреççĕ».

Пĕччен пурăнсан та Марье аппа ĕнесĕр пурăнман. Каярахпа сурăхсем тытнă. Инкекьсинкек куçа курăнса килмест: пушара пула унăн кил-çурчĕ çунса кĕлленнĕ. Юрать-ха, тăванĕсем хăйсен çуртне панă ăна.

Хуйхă пĕччен çÿремест тени тĕрĕсех. Ăна пула сывлăхĕ те хавшама пуçланă ватă çыннăн. Юн пусăмĕ час-час хăпарнине каларĕ вăл. Ирĕксĕрех кил алăкне питĕрсе ваттисен çуртне кайнă. Çапах та кил-çуртне манмасть, кайсах çÿрет. «Кунта шанчăклăрах, – терĕ кинемей. – Ялта кÿршĕ-аршă çук, пушă çуртсем анчах. Сывлăх аптратсан ăçта кайса кĕрĕн?»

Тар юхтарса тивĕçнĕ орден та çук. Вăрăхурах хăй умĕнчех çаратнă ăна. 90-мĕш çулсем пуçламăшĕнче çĕршыв саланнă вăхăтра пĕр шулькă вăрласа тарнă.

### Кашни куншăн Турра тав тăватăп

«Ачасенчен эпĕ çемьере асличчĕ. Манăн икĕ шăллăмпа икĕ йăмăк пурччĕ. Пурте вилсе пĕтрĕç. Эпĕ халĕ ваттисен çуртĕнче те, хамăр ялта та чи асли шутланатăп», – терĕ Валентина Миронова. Вăл 94 çулта. Çапах та хаçат-журналсăр, кĕнекесĕр пурăнаймасть. Çитменнине куçлăхсăрах вулать.

9 класс пĕтернĕскер чылай сумлă ĕçре тăрăшнă Валентина Мироновна. Бухгалтерта та, сĕт-çу заводĕнче мастерта та, сепарат пунктĕнче те вăй хунă. Элĕкре, Тавăт ялĕнче, Шупашкарта, Тюменьре те ĕçлеме тÿр килнĕ. «Тюмене епле çитрĕн?» – кăсăклантăм эпĕ. «Упăшкаран тарса çав хулана çитрĕм, – пулчĕ хурав. – Вăл мана шыранă, шыранă – тупайман. Виçĕ çултан хамах таврăнтăм яла. Вăл ун чухне авланнăччĕ ĕнтĕ».

Валентина Мироновна упăшкипе 11 уйăх çеç пурăннă. «Вăрçă хыççăн качча кайма арçын та çукчĕ ялта. Вăл вара кÿршĕрех пурăнатчĕ. Пысăк ĕçсене тума пулăшатчĕ пире. Мăшăрлансан аллине «çÿлелле çĕклеме» пуçларĕ. Çавна май килтен тухса тартăм. Арçын «тутине» пĕрре тутанса курнă хыççăн текех качча кайма шухăшламарăм», – кăмăллăн калаçрĕ ватă.

Ваттисен çуртĕнче вăл виççĕмĕш çул хĕл касать. Газ кĕртмен пÿрте кăмака валли вутă та чылай кирлĕ. «Тăвансем те вилчĕç, пĕччененех юлтăм, – малалла сăмахларĕ вăл. – Кунта ăшă, апат пиçнĕ. Çынпа калаçса усăлатăп. Кашни куншăн Турра тав тăватăп».

Хĕрĕ ĕмĕрне пĕччен ирттерессе амăшĕ чухланă иккен. Пĕчĕк чухне унăн ытти ачанни пек иккĕ мар, пĕр шăл çеç тухнă пирвайхи хут. Çакăн çинчен хĕрне те каланă каярах. Чăн та, сăнав тÿрре килнĕ. Пĕчченлĕх унăн чун-чĕрине пусарайман. Вăл паян та усă кăмăллă, ăшă кулăллă.

# Илем тĕнчи авăрĕнче



Пуçра ăс пулсан алăра ĕç вĕрет. Çак сăмахсене Муркаш районĕнчи Чамăш ялĕнче пурăнакан Людмила Родионова пирки каланăнах туйăнать. Сăнÿкерчĕкри юр кĕлеткене мĕнрен тунă тетĕр? Пĕр хут усă курмалли стаканран. 300 ытла стакан расхутланă.

Çĕнĕ çул умĕн районти музейра «Хамăр алăпа Çĕнĕ çул тĕлĕнтермĕшĕ» конкурс иртнĕ. Унта 600-е яхăн ĕç тăратнă. Людмила Всеволодовна вара пĕрремĕш вырăн йышăннă. Вăл конкурса хăй ăсталанă юр кĕлеткепе тата уяв чăрăшĕпе хутшăннă. Çакнашкал тĕлĕнтермĕшсем ăсталама кăмăллать хĕрарăм. Ахальтен мар хăй вăхăтĕнче вăл шкулта «Сюрприз» кружока ертсе пынă. Ачасене тăмран, хутран тĕрлĕ кĕлетке тума, хурăн хуппипе ĕçлеме, ÿкерме вĕрентнĕ. Халĕ вăл – Орининри ял тăрăхĕн специалист-эксперчĕ. Çапах та чунĕ кăмăллакан ĕçе пăрахасшăн мар. Пушă вăхăтра хурăн хуппинчен сюжетлă ÿкерчĕксем тăвать, тăмран пуканесем ăсталать. Вĕсене ялти садика парнелет.

Ĕçчен, пултаруллă хĕрарăм пахчине те илемлетет. Йывăçран касса кĕлеткесем ăсталать, вĕсене тумлантарать. Ку тĕлĕшпе ăна мăшăрĕ Вячеслав Ананьевич пулăшать. Вĕсен пахчинче юмахри сăнарсем те «пурăнаççĕ». Çавăнпах мăнукĕсем те унта туртăнаççĕ. Çуркунне аистсем «вĕçсе килеççĕ», «йăва çавăраççĕ». Кил хуçи хĕрарăмĕ вĕсене монтаж кăпăкĕнчен тунă. Кăçал пахчара качака та пулĕ.

Пахчаçимĕç, чечек калчисене килтех çитĕнтерет Людмила Всеволодовна. «Чечексĕр пахчан илемĕ çук», – тет вăл. Пурнăçа, хитрелĕхе юратаканскер театра кăмăллать. Орининри халăх театрне çÿрет. Хăй вăхăтĕнче унăн ашшĕ те, аппăшĕ те спектакльсенче вылянине пĕлтерчĕ вăл. Ашшĕ Айтар сăнарне («Айтар» драма) калăпланă, аппăшĕ – Елюка («Ялта» драма). Хăй те тĕп рольсенче выляние каларĕ.

Пĕлтĕр 95 çул тултарнă халăх театрĕ миçе ăрăва савăнтарман-ши? Унăн ячĕ-ывĕ халĕ те пĕлтерĕшлĕ. Халăх кăмăллать ăна.

Пур çĕре те ĕлкĕрме тăрăшать Людмила. Кашни ĕçре чун хавалĕ тупать вăл. Çавăнпах ăна пурăнма та, савăнма та аван.

# Шанатăп, ĕмĕте упратăп

1812 çулхи Тăван çĕршывăн вăрçи хыççăн тыткăна лекнĕ француз салтакĕсене ушкăнпа хурăнлă çулпа Çĕпĕре ăсатнă. Вĕсенчен пĕри тарнă. Ăна темиçе кун шыранă, анчах тупайман. Вăрманта, çырма-çатрара темиçе кун çÿренĕ хыççăн вăйран кайнă француз салтакĕ Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Мĕшĕлпе Караньял ялне пырса тухнă. Ял çыннисем таркăна улпут патне çаватса кайнă. Анчах лешĕ ăна влаç çыннисене парас вырăнне тарçă тума шухăш тытнă. Шăпи çакнашкал çаврăнса тухнăшăн таркăн савăннă çеç. Вăл çĕнĕ хуçана чунтан парăнса пурăнма тупа тунă. Çĕпĕр çĕрĕнче асапланиччен ку чылай лайăххах вĕт. Кăштах пурăнсан вăл чухăн хĕре юратса пăрахнă. Лешĕ те улпут патĕнче ĕçленĕ. Хуçа вĕсем пĕрлешнине хирĕç пулман. Жанн ятлă француз манăн пиллĕкмĕш сыпăкри мăн асатте шутланать. Архив документенчĕпе – Кулижан.

Манра та француз юнĕ пурри палăрать. Эпĕ эрех-сăрапа иртĕхместĕп, пирус туртмастăп. Хăй вăхăтĕнче спортпа туслă пулнă, спорт мастерĕн нормативне те тултарнă, учительте ĕçленĕ.

1996 çулта ял çыннисем ыйтнипе «Хастар» ялхуçалăх артельне йĕркелесен ĕç нумайланчĕ: шкул çуртне хăпартма, пĕрлешÿллĕ хуçалăха ура çине тăратма тиврĕ. Ку ĕçре мана атте-анне, мăшăр, юлташсем пулăшса тăнă.

1997 çулта мана машинăпа çапса хăварчĕç. Сусăрланнăскер тăна кĕреймесĕр чылай выртрăм больницăра. Ман умра яланах Люда мăшăрпа анне пулнă. Сывалма пуçласанах арăм пăрахса кайнине пĕлтĕм. Çак сăлтава Люда çырнă çыру усса пачĕ: «Хаклă Геннадий! Эпир санпа 11 çул ытла пурăнтăмăр. Çак вăхăт ахалех иртнине эпĕ ăнланса çитрĕм. Эсĕ нихăçан та çемье çынни пулман, ытти çыншăн çеç пурăннă. Эпир мĕн тĕллевпе пурăнатпăр? Камшăн пурăнатпăр? Çак çыру сана пăшăрхантарать паллах. Тархасшăн каçар мана. Манпа тĕлпулма ан тăрăш. Мана ăнлан, ан тарăх...»

Люда кайнăранпа чылай çул иртрĕ. Çыру сĕтелĕ умĕнче миçе каç çывăрмасăр ирттернине шутласа та пĕтерес çук. Ăна халалласа вун-вун сăвă çыртăм, вĕсене юрра хыврăм, сăнÿкерчĕксем турăм. Пур инкек те 13 хисеппе çыхăннине туйрăм.

Çын инкек-синкек хыççăн çичĕ хут чĕрĕ юлсан нумай пурăнать тенине илтрĕм. Турă хĕрхенессе, пулăшасса шанас килет. Тен, ман тĕле те сăпайлă, йĕркеллĕ хĕрарăм тупăнĕ.

**Геннадий СМОТРИКИН.**

**Сĕнтĕрвăрри районĕ, Караньял.**

**Кăларăма Валентина ПЕТРОВА хатĕрленĕ.**

### СĂНАВСЕМПЕ ĔНЕНÿСЕМ

✓Вĕтĕ шăллă çын усал пулать. ✓Йытă улани – çын вилессе. ✓Кăçпа çынна ялапа пама хушмаççĕ – çуха юлан. ✓Мунчара çăкăр çисен çан-çурăм канмасть теççĕ. ✓Сайра шăллă çын кутăн пулакан. ✓Çăмламас çыннăн хурт ăнать. ✓Çунса кайнă çын ялапине илме сĕнмеççĕ. ✓Çынна кашăкпа çапсан вăл чирлет теççĕ. ✓Юнкун чирленĕ çын вăрах вăхăт сывалаймĕ.

**Вăрçă ахрăмĕ**

# «Эпĕ вĕсене тĕлĕкре куратăп»

**Вячеслав Тимофеевич вăхăтран вăхăта шкафран хулăн папкине кăларать. Унта унăн асаилĕвĕсем упранаççĕ. Хăйĕн ĕмĕрĕнчи чи хăрушă самант çинчен вун-вун хут листи çине хитре почеркпа шăрçаланă. Хаяр вăрçа, выçлăха, концлагерьти кун-çулне тата унти юлташĕсене вăл нихăçан та манас çук. Манма та пултараймасть...**

### «Эсир тислĕк çимен»

Вăрçă вут-çулăмĕ вĕсен хулине çитнĕ куна лайăх астăвать Вячеслав Быков. 1942 çулхи июль уйăхĕ. Вăл ун чухне 4 çулта пулнă. Амăшĕпе, çулталăкри шăллĕпе тата кукамăшĕпе пĕрле Воронежра уйрăм çуртра пурăннă. Нимĕçсем çывăхра пулнине илтсен Быковсем кӳршисен путвалне пытаннă. Вĕсене хăвăрт тупнă...

– Манăн кукамай Ольга Проняева пилĕк чĕлхепе калаçатчĕ. Вăл ăста дипломатчĕ, – аса илет Вячеслав Тимофеевич. – Кукамай нимĕçсемпе тӳрех калаçма пуçларĕ, вĕсене темĕн парнелерĕ. Телее, Курбатово ялне утнă май пире тĕкĕнмерĕç. Çак ялта лагерьсене ямалли центр вырнаçнăччĕ.

Çул çинче темĕн те пулнă. Итлеменнисене тата таркăнсене штыкпа тирнĕ е персе вĕлернĕ. Курбатовăра çынсенчен пĕр пайне лагере янă, тепĕр пайне вара ампара хупса çунтарнă.

Лагерьте те суйлав витĕр кăларнă: пĕрисене вакунпа Германие выльăх валли ăсатнă, теприсене Чернянка ялне илсе кайнă. Унта тыткăнри çар çыннисем тата мирлĕ халăх валли концлагерь йĕркеленĕ. Быковсен çемйи унта лекнĕ.

Вячеслав Тимофеевич «вăрлама» вĕреннине асаилет. Тыткăнри ытти ачапа пĕрле нимĕç лашисен сĕллине вăрланă. Тепĕр чухне утсен тислĕкне те çиме тивнĕ.

– Мăнук пĕчĕк чухне апат çимесĕр тарăхтарнă вăхăтра: «Эсĕ лаша тислĕкне пĕрре те çимен. Вăл питĕ тутлă!» – теттĕм, – тунсăхлă кулăпа асаилет Вячеслав Тимофеевич. – Тыткăнра чăнахах та тислĕкне тăранса пурăнаттăмăр. Çынсем ăна пухатчĕç, çăватчĕç, алласа тасататчĕç ... çиетчĕç.

### «Чăмăрпа ĕçле, ачам!»

Каярахпа ачасене амăшĕсенчен уйăрнă. Хăшне-пĕрне концлагерьтен темиçе çухрăмра вырнаçнă çар госпитальне ăсатнă. Унта эксперимент валли бараксем йĕркеленĕ. 12 çулчченхи ачасене нимĕç салтакĕсем валли донор вырăнне усă курнă. Çирĕпреххисене плазма, тир валли.

Пĕчĕк Славăн пĕрремĕш ушкăнри юн пулнă. Унăн юнне аманнă салтаксене янă.

Сутă çӳçлĕ, хитре нимĕç хĕрарăмĕн Эльзăн сасси халĕ те унăн хăлхинче янăрать. Вăл кашни кунах унăн юнне илнĕ. Пĕчĕкскерĕн аллинчи юн тымарне касса трубка лартнă. Унăн тепĕр вĕçне вăйпитти арçын аллине вырнаçтарнă. Донор пулма нимĕçсем 12 çулчченхи ачасене çеç усă курнă. Вĕсен шучĕпе çак ӳсĕмрисен юнĕ таса, тĕрлĕ чир-чĕрпе пăсăлман.

«Чăмăрпа, ачам! Чăмăрпа ĕçле!» – вырăсла кăшкăрнă Эльза. Ачасем макăрнă, вăйран кайса ӳкесрен шикленнĕ. Çапла майпа чĕрĕ юлас шанăç пулнă вĕсен.

– Ытларах эпир канфетран тата «туалетран» хăраттăмăр, – каласа парать Вячеслав Быков. – Енчен те кама та пулсан канфет тăсса парсан ку вилĕме пĕлтернине чухлаттăмăр. Мĕншĕн тесен канфетра цианид пурччĕ. Тарăн шăтăка «туалет» ят панăччĕ. Унран вилĕм шăрши çапатчĕ. Çывăхне пырсан ачасем унта ӳкетчĕç те текех каялла тухаймастчĕç.

Ачасем хăвăрт вилнĕ. Вĕсен юлашки юнне сăхса илнĕ, унтан пĕр хутчен усă куракан медицина перчетки пек пăрахнă. Тир валли усă курнисем те вилнĕ: операци хыççăн эрне те пурăнайман. Вĕсен тирне ытларах танксенче çунса сусăрланнă нимĕç офицерĕсем валли сӳсе илнĕ. Хĕн-хур тӳснĕ ачасене асаилнĕ май Вячеслав Тимофеевич аллипе куçне хупларĕ те çаврăнса тăчĕ. «Тепĕр чух эпĕ вĕсене тĕлĕкре куратăп», – терĕ вăл.

### Хула ура çине тăчĕ

Кукамăшне лайăхпа асаилет арçын.

– Вăл вырăс дипломатне качча кайнă. Вĕсем мăшăрĕпе иккĕшĕ чылай вăхăт Чикагăра пурăннă. Анчах кукамай тăван тăрăхне таврăннă. Мĕншĕн тесен унта унăн хĕрĕ пурăннă, – калаçăва малалла тăсрĕ Быков. – Вăрçă пуçлансан вăл пире Чикагăна илсе каясшăнччĕ. Ку вăхăтра унта-кунта çӳреме, çитменнине Америкăна кайма, май пулман.

Вăрçă нушине Ольга Федоровна халăхпа пĕрле чăтса ирттернĕ. Вăл ăнсăртран çеç сывă юлнă.

Нимĕçсем каялла чакнă май усаллансах пынă. Çавна май тыткăнрисен пурнăçĕ те йывăрланнă.

1943 çулхи июль уйăхĕнче Воронеж тата Степной фронтсен çарĕсем тапăнса кĕнĕ. Фашистсем пĕтĕм пурлăхне пăрахса, çак шутрах концлагере те, каялла чакма пуçланă. Хăйсем тарнă май концлагерьте чĕрĕ юлнисене персе вĕлернĕ. 1943 çулхи июлĕн 8-мĕшĕнче палăртнă актра çакнашкал сведенисем упранса юлнă. Чернянск районĕнчи лагерьтен 13 хĕрарăма Германие илсе кайма суйланă. Анчах вĕсенчен пиллĕкĕшĕ тарма май тупнă. Вĕсен шутĕнче Слава Быковăн амăшĕпе кукамăшĕ те пулнă.

Вячеслав Тимофеевич асаилет: урине штыкпа чикнĕскер тăнсăр выртнă. Куçне уçнă та ун умне пĕшкĕннĕ кукамăшне курнă. Фашистсен госпиталĕнче юлнă ачасене чи малтан шыраса килнисенчен пĕри пулнă вăл.

– Нимĕçсем Воронежран кайсан çынсем хулана каялла таврăнчĕç. Фашистсем пĕтĕмпех çĕмĕрнĕ, ишнĕ, ватнă, – асаилет Быков. – Хулана паллама та çукчĕ. Пирĕн çурт чиперех упранса юлнине пула çынсем килсе вырнаçрĕç. Пурте пĕрле пурăнма тытăнтăмăр. Хулана 100 çулсăр та юсама май çуккине пĕлтернĕ нимĕçсем. Анчах Воронеж чылай маларах ура çине тăчĕ.

Вячеслав Тимофеевич халĕ 76 çулта. Вăрçă шавĕ тахçанах лăпланнă. Унтанпа вăл шкул, аслă шкул пĕтернĕ. Пĕр вăхăт Воронежри университетра, çавăн пекех область правительствинче – Александр Ковалев кĕпĕрнаттăрăн пулăшаканĕнче ĕçленĕ. Ывăлĕпе мăнукĕ те тахçанах çитĕннĕ ĕнтĕ. Çапах тыткăнра пулнă арçын куçĕ умĕнче паян та – юлташĕсен сăнарĕ. Чылайăшне вăл ятранах астăвать. Унăн аллинче вара нимĕç скальпелĕн йĕрри палăрать. Ăна вăхăт та сиплеймест...

**Ольга МИРОШНИКОВА.**
**«Аргументы и факты» хаçатран.**

**КĔСКЕН**

## Кăкăр çинче – юбилей медалĕ

Çак тунтикун Чăваш Ен ертӳçи республикăра пурăнакан 36 ветерана "1941-1945 çулсенчи Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 70 çул" юбилейлă медальпе чысланă. Хальхи вăхăтра Чăваш Енре иртнĕ вăрçа хутшăннă 1550 çын пурăнать. Тыл ĕçченĕсем – 22 пин, салтак арăмĕсем – 3 пин ытла. Блокадăри Ленинградра пурăннă 51 çын ятарлă паллăна илме тивĕçнĕ. Çул çитмесĕр фашизм ункине лекнĕ 82 çынна шута илнĕ.

Михаил Игнатьев ветерансене Крымпа Севастопольте пулни çинчен каласа кăтартнă май унта Пăрачкав районĕнче çуралса ӳснĕ, иртнĕ вăрçа хутшăннă, халĕ отставкăри контр-адмиралпа Михаил Бочкаревпа тĕл пулнине пĕлтернĕ. "Чăваш çынни 40 çул Тинĕс-çар флотĕнче службăра тăнă, курсантран контр-адмирала çитнĕ. Унăн шăпи çамрăксемшĕн тĕслĕх пулмалла. Çĕршывăн чăн историне, паттăрĕсене пĕлмелле", – тенĕ вăл.

## Текех вырттармĕç

Февраль уйăхĕн пуçламăшĕ тĕлне республикăра хуçасăр 230,3 пин гектар çĕре шута илнĕ. Çак шутран 98,2 пин гектар çĕр пайне районсенчи муниципалитетсем хăйсен харпăрлăхне илнĕ. Ку енпе Канаш (100 процент), Комсомольски (82), Шăмăршă (72), Пăрачкав (67) тата Тăвай районĕсенче (60 процент) аван ĕçленĕ.

Усă курман çĕрсене пусă çаврăнăшне кĕртес тĕлĕшпе республикăра инвентаризаци ĕçĕ пынине вулакансем пĕлмелле. Пĕлтĕрхи октябрьте унăн пĕрремĕш тапхăрĕ вĕçленнĕ. Çак вăхăтра пач усă курман е тухăçлă "ĕçлеттермен" 2090 çĕр лаптăкне тупса палăртнă. Иккĕмĕш тапхăр кăçалхи декабрьте вĕçленет. Вăл пынă чухне тупса палăртнă çĕр пайĕсене саккунпа килĕшӳллĕн йĕркелеççĕ те инвестици проекчĕсене явăçтарма е çурт-йĕр строительствинче усă курма хатĕрлеççĕ. Февралĕн 20-мĕшĕ тĕлне, тĕслĕхрен, патшалăх кадастр учетне 568 участока (357 га) шута илнĕ, 229 çĕр пайне (38,7 га) "ĕçлеттернĕ". Пĕрлехи информаци тытăмне 40 участока (41,8 га) кĕртнĕ.

**Ирина ПАВЛОВА хатĕрленĕ.**

**ÇАПЛА ÇАВ**

# Усăсăр лартман – ĕçлеттернĕ

Чурпай ялĕнче (Хĕрлĕ Чутай районĕ) аташса каяймăн. Пĕр урамлăскер 60 килтен тăрать. Тарăнах мар çырма урама икке уйăрать. Ял варринче – тăватă чӳречеллĕ пысăках мар йывăç çурт. Хăй вăхăтĕнче телейлĕ шăпапах пурăннă вăл.



*Чурпайри клуб. 1929-мĕш çулта лартнă çурт*

Чăваш патшалăх архив документчĕсем çирĕплетнĕ тăрăх – 1929 çулхи мартăн 6-мĕшĕнче Чурпайра "Красный воин" колхоз йĕркеленнĕ. Ун чухне колхоз правленийĕ, çавăн пекех выльăх-чĕрлĕх фермипе лаша витисем ял пуçĕнчи çырма хĕррипе – тӳрем лаптăкра вырнаçнă. 1950 çулта Чурпайри колхоз Çĕнĕ Атикассинчи Карл Маркс ячĕпе хисепленекеннипе пĕр тĕвве кĕнĕ. Пушанса юлнă правлени çурчĕ ун чухне çавах та ахаль ларман: малтанах унпа бригада çыннисем усă курнă, кайран...

– 1957 çулта Çĕнĕ Атикассинчи 7 çул вĕренмелли шкула лайăх паллăсемпе вĕçлерĕм. Кĕркунне 3-4 çухрăмри Штанаш вăтам шкулне çӳреме тытăнтăм. Ун чухнехи колхоз председателĕ Иван Никитич Никитин хамăр ялта агитпункт йĕркелеме сĕнчĕ, ĕçкунĕнче тӳлеме шантарчĕ. Килĕшрĕм: кăнтăрла – шкулта, каçсерен вăхăта колхоз канцелярийĕ пулнă çуртра ирттереттĕм. Çĕнĕ Атикасси библиотекарĕ Юлия Ардвеньева нумай пулăшрĕ, ял çыннисене вулама кĕнекесемпе хаçатсем парса яратчĕ. 1959 çулта çав çурта ял варрине куçарса кайрĕç те унта клуб йĕркелерĕç. Ял çамрăкĕсем шашка-шахматла, доминалла выляма пыратчĕç, купăс çеммипе ташласа-юрласа савăнатчĕç тата ытти те. Икĕ çул ĕçлерĕм, унтан Хусана вĕренме тухса кайрăм, – аса илчĕ ялта пурăнакан Владимир Архипович Игнатьев. Унăн Нина аппăшĕ те клубра чылай хушă техничкăра тăрăшнă иккен.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсен пуçламăшĕнче ялти кĕлет пек çуртра лавкка уçнă. Каярах ăна пăсса тепĕр вырăнта кирпĕчрен пĕчĕк киоск туса лартнă. Тавар туянакансене çакă çырлахтарманран райпо пĕлтĕр çĕнĕ илемлĕ çурт тума тытăнчĕ. Маларах асăннă клубпа киоск хушшинче вырнаçнăскере Çĕнĕ çул умĕн хута ячĕç. Ун çумĕнче 55 çул ларакан клуб çурчĕ халĕ пушшех айванăн та мĕскĕннĕн курăнать.

Унран анатарах ялта Семеновсем пурăнаççĕ. Арăмĕ – техничкăра, хăй клуб заведующийĕнче ĕçленĕ Аркадий Никифорович акă епле аса илет иртнĕ вăхăта:

– Ун чухне ялсенче электричество пулман. Çавăнпа эпир клуба кинокартинăсем илсе килессе чунтанах кĕтнĕ. Ара, электроçутăна бензинпа ĕçлекен кинодвигатель урлă кăна курнă-çке. Акташри Леонид Никитин, Çĕнĕ Атикассинчи Иван Сидухин, Кушлавăшри Виталий Петров киномеханиксем пулса çӳрерĕç. Мăн Ямашпа Яманкасси çамрăкĕсем сайра-хутра пирĕн клубра спектакль, концерт кăтартсалакă. Çĕнĕ Атикасси учителĕсем ашшĕ-амăшĕсен пухăвĕсене ирттернĕ.

Ялта çуралса ӳснĕ, пединститутра пĕлӳ илнĕ, Штанашри вăтам шкулта тата Хĕрлĕ Чутайра Çĕрпӳ районĕнчи спорт комитечĕсенче чылай вăй хунă Василий Ефимов та ял клубĕнче малтанхи утăмсем тунă. Валерий Ивановпа Олег Семенов купăсçăсем те клуб ĕç-хĕлне йĕркелесе пыма тăрăшнă.

Юлашки вунă çулта икĕ яла пĕрлештерсе тăнă "Дружба" хуçалăх салансан колхоз клубне тытса тăма никам та килĕшмен. Ăна çăрапа питĕрсе илнĕ. Энергетиксемпе пушар хуралĕн ĕçченĕсем хăрушлăх кăларса тăратакан çуртра электроçутă та пама чарнă. Ăраскалсăр пулчĕ унăн шăпи.

**Геннадий САВЕЛЬЕВ, тавраплĕлӳçĕ.**

# Вăшăл-вашăлли ял тытать

1-мĕш стр.

**– Валентина Петровна, хăвăра темĕн пек сăпайлă кăтартма тăрăшсан та хамăн шухăша улăштармастăп. Сирĕн пек ĕçченсемпе ял илемлĕ. Кун пек чухне унăн сасси хăйăлтатса мар, тикĕссĕн тухать. Çывăхри чукун çулпа чашкăрса иртекен пуйăс кустăрми сассипе те, тен, танлаштарма пулать ял пурнăçне?**

– Ялтан инçе мар чукун çул иртни Энĕшпуçсемшĕн паха ĕнтĕ. Пуйăспа Канаша, Хусана çитме пулать. Ĕçлеме те çÿреççĕ, килте ÿстернĕ пахчаçимĕçе сутма та. Ялта пурин валли те ĕç çук. Пулсан та шалăвĕ çырлахтармасть. Ав ман упăшка цинк ирĕлтерсе сăрлакан порошок тунă çĕрте ĕçлетчĕ. Производствăна пĕтерсен Хусанта проводника вĕренчĕ, халĕ пуйăс çинче тăрăшать.

Тен, чукун çул пурриех кунти пурнăçа тытса пыма пулăшать. Пушă çуртсем ялта пур, анчах нумай мар. Энĕшпуçа пĕтсе пыракан ял теейĕмĕн.

**– Чукун çул пурри çур пурнăç пулĕха, анчах хальхи çамрăксем ашшĕ-амăшĕ ялта тертленнине е вĕреннĕ профессипе ĕç тупма йывăррине кура ялта çавах юласшăн мар.**

– Килĕшместĕп. Хамăн ачасене темĕн пек хулана хăвалатăп. Унта тĕпленччĕр тетĕп. Пач та каясшăн мар. "Ялах килетпĕр", – теççĕ. Асли Шупашкарта пĕлÿ пухнă хыççăн Пенси фончĕн районти уйрăмне вырнаçрĕ. Кунсерен ялтан ĕçе çÿрет. Хальхи тапхăрта ăна икĕ уйăхлăха командировкăна Симферополе янă. Унта та пулин юлха тесен те яхăнне ямасть.

Тепĕр ывăл Шупашкарти педагогика университетĕнче физвоспитани факультетĕнче вĕренет. Вăл та яла таврăнасшăн. Мĕн пĕчĕкрен хулана хăваланин усси çук. Шкулта 10-мĕш класра вĕренекен хĕрĕм кăна хула çинчен калаçать.

Эпир çемьере пиллĕкĕн çитĕннĕ. Пурте яла юлнă. Пысăк ĕçсене яланах пĕрле тăватпăр. Çавна кура-ши ывăлсем те яла килĕштереççĕ.

**– Ара, ачасем ялта юлма кăмăл тунăшăн хĕпĕртемелле çеç. Мĕншĕн хулана хăвалатăр вĕсене? Ав мĕнле хăтлă, пысăк çуртра пурăнатăр. Ачасемшĕнех тунă ĕнтĕ.**

– Çапли çапла та-ха... Ялта ĕçлесе сывлăх пайтах пĕтет. Ялан мĕн те пулин тумалла. Пирĕн тата пурне те хăвăрт тăвас килет.

**– Тен, эпир ĕçлеме пĕлместпĕр? Кансăр, тăрăнса кайиччен тăрăшма хăнăхнине ыр йăла теме пулать-ши?**

– Тĕрĕс те калатăр пулĕ. Çăла шыв ăсма тухсан та хамăра шеллеместпĕр. Витрепе йăтса вăхăт нумай ирттересрен флягăпа турттарма пуçлатпăр.

**– Ачасем пулăшсан мĕншĕн турттармалла мар? Вĕсем çумра, инçете тарма шухăшламаççĕ.**

– Вĕсем пулăшмасан çакăн чухлĕ вылăх усрас çук. Упăшка ĕçре чухне вылăх пăхма аслă ывăлпа ирхине 5 сехетре тухатпăр. Ĕне сумалли аппарат туяннă, анчах унпа пĕччен ĕçлеме хăнăхса çитейменрен иксĕмĕр сăватпăр. Виçĕ ачи те ĕне сума пултараççĕ. Ывăлсем те, упăшка та ĕç тиркемеççĕ: урай та çăваççĕ, апат та пĕçереççĕ.

**– Паха воспитани панăшăн сире çĕре çити пуç таймалла. Пурнăçăра ялпа, çĕр ĕçĕпе çыхăнтарман пулсан чăвашăн маттур ывăлĕсен йышĕ чакĕччĕ. Нимĕншĕн те ÿкĕнмелле мар пек туйăнать.**

– Ÿкĕнместĕп-çке. Ялти пурнăç килĕшет. Хуларинчен пĕртте кая мар. Çăвăнмалли пÿлĕм, туалет ăшă пÿртре. Урамра уçă сывлăш. Вылăх усрамасан чăн хулари пекех канăçлă пурăнатăн.

**– Эсир унашкал канăçлăха хăнăхассăн туйăнмасть.**

– Мĕншĕн? Лайăххине хăвăрт хăнăхаççĕ, иртни часах манăçать. Эпир, паллах, нихăçан та ĕнесĕр пурăнман. Килте çурт-йĕр çĕкленĕ чухне сысна усраса вĕсен шутне 30 пуçа та çитернĕ. Кролик та тытнă. Халĕ ĕне, пăру, сурăх усранисĕр пуçне бройлер чăх 40 пуç пур. Çăмарта тăвакан чăх, хур-кăвакал йышлă.

**– Чăвашăн сĕт юр-варне, вылăх ашне хамăр тăрăхри чăвашах çисе килнет-и е Хусан таврашне ăсанать-и?**

– Унта та ăсанать, хамăр патра та юлать. Какая ялти çынсем, хуларан килекенсем туянаççĕ. Сĕте Тăвайсем пуçтараççĕ. Паянхи кун – 1 литрне 17 тенкĕпе. Чи пысăк хак 20 тенкĕ пулнă. Пĕр вăхăтра сĕт сутма Хусана та çÿренĕ. Халĕ те унта хаклăрах сутăнать теççĕ. 1,5 литр сĕтшĕн унти пасарта 60 тенкĕ параççĕ. Пирĕн патра йÿнĕрех.

Пахчаçимĕçе, аш-пăша ял çыннин ăçта сутмалла? Вăрмарта унашкал тавар ахалех нумай.Чукун çул станцийĕ инçе мартан ирĕксĕрех пуйăспа Хусана çул тытатăн. Малтан, тĕслĕхрен, çĕрулмине станцине çитиччен çунашкапа та туртнă. Халĕ килти çăмăл машинăпа леçеççĕ.

**– Сутма çÿреме вăхăт кирлĕ. Çулла вылăх апачĕ хатĕрлесех кун иртет пулĕ.**

– МТЗ трактор туяннăран утçине хăвăрт вĕçлетпĕр. Алăпа нушаланмастпăр. Трактор çумне кăкармалли мĕнпур хатĕр-хĕтĕр пуртан арçынсем техникăпа утта хăйсемех çулаççĕ, таваççĕ, купасем тăваççĕ те тĕркеме хываççĕ. Кайран тиесе килетпĕр çеç. Ĕç çăмăлланнă, уйра нумай çын кирлĕ мар.

Вылăха кĕтĕве ярсан пушă вăхăт пайтах. Вăрмана кăмпана каятăн та сутма Хусана тухатăн. Çынсен хăярĕ пулса çитиччен теплицăрине (ăна тимĕр кăмакапа хутса ăшăтаççĕ – авт.) пуçтарса каллех сутма пасара васкатăн.

Вылăх хăйĕн çумне ниçта пăрăнайми çыхса лартать тесе калаймастăп. Тупас тесен канма та вăхăт пур. Йышлă вылăхпа килте е ялтах ĕçлесе пурăнакан çын пулни паха ĕнтĕ.

**Ирина НИКИТИНА калаçнă.**

# Çирĕп хунав авăнмасть

Пысăках мар çуртра икĕ çемье пурăннă. Выртма-тăма вырăн çитмен. Васлей пĕчĕклех йывăрлăха хăнăхнă. Çемьере ачасенчен асли пулнă май унăн тутине аван пĕлсе çитĕннĕ. Йывăрлăха кура çамрăклах кĕтÿç пушши сĕтĕрме тивнĕ Патăрьел районĕнчи Ишлĕ ялĕнчи Василий Иванович Скоблевăн.

Пĕррехинче кĕтÿри пĕр каскăн ĕне айккине пăраннă. Çакăншăн ăна, вунă çулти ачана, вăйпитти арçын çупкă çитернине асаилет вăл.

Шкула çÿресе пĕлÿ пухасси çинчен сăмах та пулман. Пурĕ те икĕ класс кăна пĕтерме тÿр килнĕ. Кăшт ÿссенех çамрăк çине йывăртарах ĕçсем тиеннĕ: колхозра лашапа çур аки тунă, тырă акнă.

Çул çитсен хĕсметре тăнă. Унта виçĕ çул служба йыттисене тĕрлĕ хăнăхтарусене вĕрентнĕ. Хĕсметрен таврăнсан пĕр тапхăр Ишлĕри кирпĕч заводне тунă çĕрте вăй хунă.

Механизатор пулас ĕмĕте Казахстанра пурнăçа кĕртнĕ. Унта пĕлĕве ĕçпе çирĕплетнĕ, ăсталăха туптанă. Икĕ çул тăрăшсан тăван ял колхозĕнче "çăпаталлă" тракторпа 6-7 çул ĕçленĕ, мухтава тивĕçнĕ.

Маттур каччăна ытти ĕç те илĕртнĕ. "Мĕншĕн Çĕпĕр вăрманĕнче сухăр юхтарса пăхас мар?" – тенĕ те Тавда тăрăхĕнчи тайгана çул тытнă. Унăн ытамне икĕ çула лекнĕ. Кунта та пултарулăхĕпе палăрнă, çитĕнÿсем тунă.

Çĕпĕртен таврăнсан та вăрмантан уйрăлас килмен. "Маяк" колхозăн вăрманта тикĕт юхтаракан, кăмрăк тăвакан станĕнче 4-5 çул тăрăшнă. Тепĕр чухне ĕç вăраха тăсăлнă. Анчах Василий нихăçан та çĕр касма вăрманта юлман, темле пулсан та 7-8 çухрăмри тăван ялнех таврăннă. Унта ăна мăшăрĕпе тăватă ачи кĕтнĕ. Тепĕр ир тул çутăличчен каллех вăрмана тухса утнă.

Пурнăç пăрăнăçсăр иртмест тени тĕрĕсех пулĕ çав. Василий Иванович çемйипе аслашшĕ килĕнчен уйрăлса тухма шухăшлать. Çурт лартма вырăн ыйтса хут çырса парать. Анчах ку ĕçре урапа ăшне патака чикекен тупăнать: пĕр чиновник хирĕç пулать. Çемье çакăншăн хуçăлса ÿкмест. Ялта пĕччен пурăнакан пĕр ватăна пăхма тытăнать. Ăна тата вырăнпа выртакан чирлĕ амăшне – салтак арăмне – çĕр çула çитичченех тенĕн пăхса упраççĕ. Кайран тинех çак вырăнта çурт, хуралтăсем çавăрса пурнăçа йĕркелесе яраççĕ.

Каллех çĕнĕ ĕç вăрттăнлăхĕ канăç памасть çемьене. Хальхинче – кăçатă йăваласси. Шухăшлаççĕ те ăсталăха вĕренеççĕ, тăрăшсах çăматă йăвалама тытăнаççĕ.

Пăлапуç Пашьелĕнче чиркÿ тумалли çинчен хыпар тухсан Василий чăтса тăраймасть, унта тухса утать. Пултарулăхне кура ăна кунти ĕçе ертсе пыма шанаççĕ, чиркÿ старостине суйлаççĕ. Мăшăрĕпе тăрăшса вăй хураççĕ. Çулталăкранах чан сасси чиркÿ уçăлни çинчен хыпарлать. Унтанпа 20 çул та иртнĕ ĕнтĕ, чиркĕве яланхиллех халăх çÿрет.

Паянхи кун Василий Иванович тăххăрмĕш теçеткен çулĕсене шутлать. Пурнăçри йывăрлăхсем, пăтăрмахсем çирĕп хунава авăймарĕç. Килĕнче мăшăрĕпе иккĕшех пурăнаççĕ. Сумлă ватлăха пăхмасăр вылăх-чĕрлĕх, пыл хурчĕ тытаççĕ. Кăткăсрах ĕçсене пурнăçлама тракторĕ те пур. Пулăшма кану кунĕсенче, уявсенче ачисем, мăнукĕсем пуçтарăнаççĕ. Каçсерен ашшĕ-амăшĕпе сĕтел хушшине ларса, шăкăл-шăкăл калаçса иртнине асаилеççĕ.

**Иван ЕРОФЕЕВ.**
**Патăрьел районĕ, Ишлĕ ялĕ.**

## АХ, АНЧАХ...

### Хваттер ăçта?

– 600 пин тенкĕпе хваттер сутатăп, туянса юлăр, – сĕннĕ Шупашкарти хĕрарăм хăйĕн паллаканĕсене.

Хальхи вăхăтра кун пек хакпа хваттер мар, пĕчĕк пÿлĕм те туянаймăн. Лешсем иккĕленсе тăнине кура усламçă-ултавçă çине тăрсах юптарма тытăннă. Хваттер ватă çынсен имĕш. Вĕсен вара тăван-пĕтен çук. Хуçисем вилсен куçман пурлăх патшалăха юлать. Çавăнпа хваттере йÿнĕ хакпах сутаççĕ. Çакна пĕлсен хĕр савăнсах туянма килĕшнĕ. «Тахçанах пĕлекенскер улталамĕ ĕнтĕ», – тенĕ вăл тăванĕсене.

– Шаннипех хĕрарăма укçа кăларса патăм. Унччен ун пирки лайăххине кăна илтме тÿр килнĕ те улталасса шутлама пултарайман. Укçине тыттартăм, анчах хваттере кĕреймерĕм. Ултавçă капкăнне манăн паллакансем те çакланнă, – каласа панă инкек тÿсекен. – Вăл хваттер уççине паманнипе право органĕнчен пулăшу ыйтрăмăр.

Тĕпчев вара хĕрарăм çапла майпа 8 çынна хваттер «сутнине» палăртнă. Анчах вĕсем укçине те таварайман, хваттерлĕ те пулайман. Ултавçă çынсене 6 миллион тенкĕлĕх шахвăртса хăварнă. Ăна айăплама уголовлă ĕç пуçарнă ĕнтĕ.

## ЧĂВАШ НАЦИ ТЕЛЕКУРАВĔН ЭРНЕЛĔХ ПРОГРАММИ

**Тунтикун, мартăн 9-мĕшĕ**
9.00 «ЧЕБОКСАРЫ – ГОРОД СЛАВЫ ТРУДОВОЙ». ГАЛА-КОНЦЕРТ УЧАСТНИКОВ ТВОРЧЕСКОГО ФЕСТИВАЛЯ
11.00 «ЮРАТУПА КĂВАКАРЧĂНСЕМ». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)
13.00 «О, КĂНА КĔРСЕ КУРМАЛЛА». ВОДИТЕЛЬСЕН КУННЕ ХАЛАЛЛАНĂ КОНЦЕРТ (12+)
17.00 «НА МИР СМОТРИТЕ ДОБРЫМИ ГЛАЗАМИ» (12+)
18.00 «ТАВРĂНАТĂП, КĔТ МАНА». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)
20.00 «САМЫЙ ЛУЧШИЙ ПАПА» КОНКУРС. Г. ЧЕБОКСАРЫ 2015 Г.

**Ытларикун, мартăн 10-мĕшĕ**
7.00 «ЭХ, ЮРРĂМ, ЯНĂРА!» (12+)
7.30 «АКИЛБУПСЕР» (6+)
8.00 «СПОРТ ДЛЯ ВСЕХ» (12+)
8.30 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД» (12+)
9.00 «НА ОЛИМПЕ» (12+)
13.00, 16.00, 19.00, 22.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
14.00, 17.00, 20.00, 23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.30 «ÇĔР ТИВЛЕЧĔ» (12+)
20.30 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД» (12+)
21.00 «ПОПУГАЙЛĂ ХĔРАРĂМ». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)

**Юнкун, мартăн 11-мĕшĕ**
7.00, 19.00, 22.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
7.15, 13.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
7.30 «ÇĔР ТИВЛЕЧĔ» (12+)
8.00, 20.00, 23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.15 «ЯЛАН ЯНРА, ЧĂВАШ СĂМАХĔ» (0+)
19.30 «ЛИТЕРАТУРА ТĔПЕЛĔ» (12+)
20.30 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
21.00 «ШУРĂ ЫЛХАН». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)

**Кĕçнерникун, мартăн 12-мĕшĕ**
7.00, 13.00, 16.00, 19.00, 22.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
7.15 «ЯЛАН ЯНРА, ЧĂВАШ СĂМАХĔ» (12+)
7.30 «ЛИТЕРАТУРА ТĔПЕЛĔ» (12+)
8.00, 14.00, 17.00, 20.00, 23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
8.30 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
9.00 «НА ОЛИМПЕ» (12+)
19.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.30 «ЭХ, ЮРРĂМ, ЯНĂРА» (12+)
20.30 «СВЯТЫЕ МЕСТА ЧУВАШИИ» (12+)
21.15 «САРПИГЕ». БАЛЕТ В 2-Х АКТАХ ПО СКАЗКЕ Е. НИКИТИНА (6+)

**Эрнекун, мартăн 13-мĕшĕ**
7.00, 13.00, 16.00, 19.00, 22.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
7.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
7.30 «ЭХ, ЮРРĂМ, ЯНĂРА» (12+)
8.00, 14.00, 17.00, 20.00, 23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
8.30 «МЕСТНОЕ САМОУПРАВЛЕНИЕ» (12+)
9.00 «НА ОЛИМПЕ» (12+)
19.15 «ЮРĂ ÇАВРĂМĔ» (12+)
19.30 «КИЛ ĂШШИ» (12+)
20.30 «НАОБУМ» (12+)
21.00 «МЫСКАРАСĂР ТУЙ ПУЛМАСТЬ». КАМИТ (12+)

**Шăматкун, мартăн 14-мĕшĕ**
7.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
7.15 «ЮРĂ ÇАВРĂМĔ» (12+)
7.30 «КИЛ ĂШШИ» (12+)
8.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
8.30 «НАОБУМ» (12+)
9.00 «ДАВИДПА СЭНДИ». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)
10.30 «ЖЕМЧУЖИНКИ ЧУВАШИИ» (6+)
13.30 «ЫРАТУ». ДОКУМЕНТЛĂ ФИЛЬМ (12+)
17.00 «ЛИТЕРАТУРА ТĔПЕЛĔ» (12+)
17.30 «КИЛ ĂШШИ» (12+)
18.00 «КАÇХИ ТĔЛПУЛУ» (12+)
19.00 «ЫРĂ КĂМĂЛПА» (12+)
19.30 «ТАРÇĂ». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)

**Вырсарникун, мартăн 15-мĕшĕ**
9.00 «НЕПРЕХОДЯЩИЕ ЦЕННОСТИ ИСКУССТВА» МОРИС ЯКЛАШКИН (6+)
11.00 «ПĔРРЕ, ИККĔ – ХУЙХĂ ИНКЕК МАР». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)
12.30 «ХЫРĂМА ТЫТСА КУЛАР-ХА!» В. ПЕТРОВ ШОУ-КОНЦЕРТ (12+)
17.00 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД» (12+)
17.30 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
18.00 «НАОБУМ» (12+)
18.30 «СВЯТЫЕ МЕСТА ЧУВАШИИ» (12+)
19.30 «САМЫЙ ЛУЧШИЙ ПАПА» КОНКУРС. Г. ЧЕБОКСАРЫ 2015 Г.


## РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРÿСЕМ

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое качество. Доставка. Т. 89674704677.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89674704677.

**23. Гравмассу,** песок, бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Март, 4 – юнкун | Март, 5 – кĕçнерникун | Март, 6 – эрнекун | Март, 7 – шăматкун | Март, 8 – вырсарникун | Март, 9 – тунтикун | Март, 10 – ытларикун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 6.36 | 6.33 | 6.31 | 6.28 | 6.25 | 6.23 | 6.20 |
| | анать | 17.30 | 17.32 | 17.35 | 17.37 | 17.39 | 17.41 | 17.43 |
| Кун тăршшĕ | | 10.54 | 10.59 | 11.04 | 11.09 | 11.14 | 11.18 | 11.23 |
| УЙĂХ | тăхри | тулса пырать | тулли уйăх (21.04) | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать |
| | кунĕ (12 сехет тĕлне) | 14-мĕш кун | 15-мĕш кун | 16-мĕш кун | 17-мĕш кун | 18-мĕш кун | 19-мĕш кун | 20-мĕш кун |
| | | Арăслан паллинче | Хĕр паллинче | Хĕр паллинче | Тараса паллинче | Тараса паллинче | Тараса паллинче | Скорпион паллинче |

## КĂМĂЛ ТУРАМ – ПĔР ТУРАМ

# Чĕри ылтăн, алли тимĕр...



### Композиторпа паллашни

Валентин Александрович Алексеев – паллă баянист, ăста педагог, чăваш музыкинче нумай жанрпа ĕçлекен композиторсенчен пĕри. Иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенче ăна Чăваш Енре Юрий Мясникова улăштарнă пĕрремĕш баянист тетчĕç. Çӳллĕ, хитре сăн-питлĕ, кĕрнеклĕ каччă ялан юлташĕсен çавра ушкăнĕнче çӳретчĕ. Тата паллă композиторсемпе Герман Лебедевпа, Анатолий Михайловпа, Тимофей Фандеевпа çывăх туслăччĕ. Концертсенче вăл сехечĕ-сехечĕпе баян калани пĕтĕм кураканшăн чун киленĕçĕ пулнă.

Çитмĕлмĕш çулсенче халăх хушшинче Валентин Александрович урăх хулана ĕçлеме куçать тесе сăмах тухрĕ. Чăн та, малтан ăна Çĕпĕр (Новосибирск) патшалăх халăх хорне баянистра ĕçлеме йыхравланă. Каччă аптраса ӳкнĕ, мĕн тумалла? Унтан Атăлçи (Куйбышев) тата Оренбург хорĕсем ĕçлеме чĕнеççĕ. Çук, ырлăхран ырлăх шырамаççĕ теççĕ вĕт-ха. Валентин Алексеев баянист шурă Шупашкара нихăш хулапа та улăштармасть. Унра чăваш юнĕ вĕрет, чунĕнче хăйне евĕр кĕвĕ-çемĕ пĕр чарăнми вылять.

### «Хăлхара – купăс сасси»...

Кунĕ-кунĕпе купăссен янкăр сассипе кĕрлесе ларакан ешĕл йăмрасем айĕнчи Чашлама ялĕнче (Куславкка районĕ) 1937 çулхи апрелĕн 14-мĕшĕнче çуралнă Валька тăвата уйăхрах ашшĕсĕр тăрса юлнă. «Ан макăр, ывăлăм, лăплан, – ачашланă ăна амăшĕ Анна Александровна. – Çуралма ĕлкĕртĕн çеç, хуйхăпа суйха аннӳ кăкăрĕнчен сĕтпе ĕçетĕн».

Ачалăхĕ аслашшĕпе асламăшĕ килĕнче иртнĕ. Амăшĕ трахсестрара ĕçленĕ, пушă вăхăт тупăнсан ялти çичĕ çул вĕренмелли шкула пĕлĕвне ӳстерме çӳренĕ. Унтан Хусанта медицина училищинчен вĕренсе тухать. Асламăшĕ Валькана пиллĕкрех тальянкăпа чăваш ташши калама вĕрентнĕ. Урамра мĕнле кĕвĕ-çемĕ илтет – тӳрех пӳрте чупса кĕрсе купăс пĕрмисене туртса янă. Çĕрле ыйхăран вăрансассăн та аслашшĕне хулпуççирен хуллен силленĕ: «Кĕвĕ, кĕвĕ, хăлхара – купăс сасси».

Çĕршывра хăрушă вăрçă кĕрленĕ. Чашламара вăйпитти арçынсем те юлман. Ялти ватăсем, хĕрарăмсемпе шкул ачисем çĕнтерĕве çывхартма пĕтĕм вăя парса ĕçленĕ. Аслашшĕ пĕчĕк мăнукне хăй пĕрремĕш тĕнче вăрçинче çапăçни, Австрире тыткăнра пулни çинчен кала-кала панă. Тыткăнра вырăс салтакĕсене хытă асаплантарнă, выçăллă-тутăллă усранă. Ытларах вĕсем сăрт-ту ĕçĕсенче нушаланнă. Вăйран тайăличчен киркăпа çапса чул ватнă. Виçĕ хутчен тыткăнран тарнă, анчах Раççее çитеймен. Аслашшĕ ирсĕр вăрçа тарăхса сивленĕ, чунтан ылханнă.

Ача-пăча ури айĕн çил вĕрет теççĕ. Урама тухать çеç – юлташĕсене тĕл пулать, «вăрçăлла» выляма пуçлаççĕ. Вăйă вĕçленсен, чукун çул разъездне чупаççĕ. Кунта кунне темиçе хутчен Хĕвеланăçнелле вакунсем çине тиенĕ самолетсем, танксемпе тупăсем иртеççĕ. Вĕсене курсанах пурте урра! кăшкăрса яраççĕ. Ытларах чухне Валька кӳршĕ урамри Жуковскин килĕ умне кĕвĕ-çемĕ итлеме çӳрет. Вĕсен çемйинче çичĕ ача – Рем, Лев, Витольд, Толя, Гена, Алевтина, Фая ӳснĕ, пурте музыкант. Ашшĕ – Николай Кириллович пĕчĕк Валькан асламăшĕн тăван шăллĕ пулнă.

### Музыкантсен çемйи

Манăн Жуковскисен çемйи çинчен тĕплĕнрех чарăнса тăрассăм килет. Тĕлĕнмелле шăпаллă кил-йыш. Николай Жуковскин баянĕ Куславккапа Вăрмар тăрăхĕнче чи малтанхи пулнă. Вăл хăй тĕллĕнех калама вĕреннĕ, тата тĕлĕнтермĕш виртоуз пулнипе палăрнă. Хăйĕн ăсталăхне туйса илет те ял урамĕсем ăна ытла тăвăр пек туйăнма тытăнаççĕ. Çапла вăл темле цирк артисчĕсемпе ермешсе каять те Ленинградах çитет. Кунта кунĕн-çĕрĕн баянне турттать, пĕлӳ пухать, чаплă артистсемпе паллашать. Кинотеатрсенче ĕçлеме те ĕлкĕрет. Вăл сасăсăр (нимуй) кино кăтартнă чухне, экран çинчи лару-тăрупа килĕшӳллĕн, тĕрлĕ кĕвĕсем каласа ларать.

Темиçе çул каялла Петĕр Яккусен поэт мана Элĕк районĕнчи пĕр ăста кăмакаçăна ялтан яла вăрласа çӳресе кăмака тутарни çинчен каласа панăччĕ. Çак виртуоз-импровизатора та çапла хулари кинотеатрсем тăрăх турттарса çӳренĕ. Ленинградран вăл Хусана çитнĕ, унтан – Канаша. Ăста баянист пур çĕрте те кирлĕ иккен!

Аслă ывăлне – Рем Николаевич Жуковские (1927-1991) Чăвашра аван пĕлеççĕ. Вăл Тĕрлемесри вăтам шкул хыççăн Шупашкарти музыка училищине вĕренме кĕрет. Диплом илсен ăна çак училищĕре баян класĕнче ĕçлеме хăвараççĕ. Вăл пĕлӳпе ăсталăх панă баянистсемпе композиторсене Чăваш Енре пĕлмен çын та çук пулĕ. Вĕсен шутĕнче Валентин Алексеев, Михаил Михайлов, Александр Юхтанов, Николай Эриванов, Виталий Андреев, Валентин Сизов, Авраам Бурундуков т.ыт.те. Вăл хăй ĕмĕрĕнче 500 яхăн баяниста пурнăç çулĕ çине кăларнă, республикăри халăх пултарулăх çуртĕнче баянист-хоровиксен курсĕнче те ĕçленĕ. Рем Николаевич баянистсем валли «Чувашские плясовые наигрыши» кĕнеке пичетлесе кăларнă.

**Герман ЖЕЛТУХИН.**

*(Малалли пулать.)*

## ĔНЕР, ПАЯН, ЫРАН

### Пулăçсем ăмăртнă

Елчĕк районĕнчи Лаш Таяпара пулăçсен фестивалĕ иртнĕ. Ăна кăçалхипе иккĕмĕш хут йĕркеленĕ. Пĕлтĕрхи ăмăртура «Елчĕк» команда çĕнтернĕ. Çавна май вĕсем алран алла куçакан кубока илсе килнĕ.

Кăçалхи ăмăртура Лаш Таяпасем мала тухнă. Вĕсем пуринчен нумайрах пулă тытнă.

Патреккел ялĕнчи Смирновсем фестивале çемйипех килнĕ: ашшĕ, ывăлĕ тата хĕрĕ. Мероприятие Александр Дмитриев фермер йĕркеленĕ. Вăл хăй те пулă тытма, сунара çӳреме кăмăллать.

### «Салют, Çĕнтерӳ!» фестиваль

Аслă Çĕнтерӳ 70 çул тултарнине халалласа Хĕрлĕ Чутай районĕнче тĕрлĕ мероприяти йĕркелеççĕ. Нумаях пулмасть асăннă тăрăхра «Салют, Çĕнтерӳ!» фестиваль иртнĕ. Унта районти вĕренӳ учрежденийĕсен коллективĕсем хутшăннă. Вĕсем пурте фестивале тĕплĕн хатĕрленнĕ. Вăрçă вăхăтĕнче юрланă юрăсене, халăхра анлă сарăлнисене шăрантарнă, сăвăсем вуланă. Концерта хастар хутшăннă кашни коллектив Хисеп хутне тата укçан премие тивĕçнĕ.

### Ачасем валли – парне

ЧР Наци библиотекинче «Ял ачисене – кĕнекесем» ыркăмăллăх акцийĕ йĕркеленĕ. Ку мероприяти ачасене кĕнекепе туслашма пулăшĕ. Ыркăмăллăх акцине вулакансем те, партнерсем те хутшăнма пултараççĕ.

Акцие çулталăк вĕçĕнче пĕтĕмлетĕç. Палăртма кăмăллă: ачасем валли 1000 яхăн кăларăм пухăннă та ĕнтĕ. Вĕсен йышĕнчех истори, таврапĕлӳ кĕнекисем пур.

### Çул укçи хакланать

Троллейбусри çулçӳрев 1 тенкĕ ӳссе 15 тенке çитет. «Маршруткăсенче» вара 20 тенкĕ тӳлеме тивĕ, хальхинчен 4 тенкĕ ытларах. Троллейбуспа çӳремелли уйăхлăх билетшăн – 700, автобуспа çула тухмашкăн 750 тенкĕ тӳлеме тивĕ. Пĕрлехи билет хакĕ – 1050 тенкĕ. Хула çумĕнчи тата хуласен хушшинчи маршрутсенче хаксем улшăнмаççĕ. Йышăну мартăн 10-мĕшĕнчен вăя кĕрет.

### Старостăсем канашланă

Патăрьел районĕнче ял старостисен пĕрремĕш слечĕ иртнĕ. Вĕсем пĕр-пĕрне хăйсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарнă. Старостăсем Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Çĕнтерӳ тунăранпа 70 çул çитнĕ май аллея уçасшăн. Ку тĕлĕшпе халăха ертсе пыракан кирлине пĕлтернĕ.

### Шупашкарта тата Канашра

Кăçал Республика кунĕнчи тĕп мероприятисем Шупашкарта тата Канаш районĕнче иртĕç.

Культура мероприятийĕсене Чăваш автономи облаçне йĕркеленĕренпе – 95, Аслă Çĕнтерӳ пулнăранпа 70 çул çитнине тата Литературăпа К.В.Иванов çулталăкне халаллĕç.

Июнь уйăхĕн 23-24-мĕшĕсенче йăлана кĕнĕ тăрăх Пĕтĕм Раççейри халăх пултарулăхĕн «Раççей çăлкуçĕсем» фестиваль иртĕ. Алĕç ăстисен конкурсĕ те çав кунсенчех пулĕ. Июнь уйăхĕн 24-мĕшĕнче – Пĕтĕм чăвашсен Акатуйĕ.

### Парăм пур – кредит илеймĕн

Малашне кредит илме йывăрланать. Кашни тӳлевпе парăма кредит историйĕнче палăртĕç. Кредит парăмне çеç мар, коммуналлă пулăшушăн е карас çыхăнăвĕшĕн парăма кĕрсен те информацие пĕр çĕре пухса пырĕç. Çапла вара пĕр-пĕр пысăках мар тӳлевпе вăхăтра татăлмасан та кредит памасса пултараççĕ.

Çынсен тупăшĕ пирки хыпара вара банксен Пенси фончĕ тата Федерацин налук служби урлă тĕрĕслеме май пулĕ. Çапах та кредит учрежденийĕсен пĕр-пĕр çын тупăшĕ пирки информацие кварталта пĕр хутчен ытла ыйтма юрамасть. Çак çĕнĕлĕхсем «Кредит историйĕ çинчен» саккуна улшăну кĕртнипе çыхăннă.

**Валентина МАКСИМОВА.**

**Суйлăр, çырăнăр, вулăр!**

**Февраль уйăхĕн 26-мĕшĕнчен тытăнса мартăн 7-мĕшĕччен**

**«Хыпар» Издательство çурчĕн хаçат-журналне 2015 çулăн иккĕмĕш çурринче илсе тăмашкăн йӳнĕ хакпа çырăнтараççĕ.**

***Васкăр, юратнă кăларăмсене йӳнĕлле çырăнса юлăр!***

Организатор торгов конкурсный управляющий СХПК "Звезда", ИНН/ОГРН 2102000155/ 1022102030554, Чувашия, Аликовский район, д. Ягунькино, Кузьмин Генрих Ильич, ИНН212806028102, СНИЛС 01075993750 г. Чебоксары, Разина, д. 14, член НП "ДМСО" ИНН 2721099166, ОГРН 1032700295099 г. Хабаровск, Краснореченская, 92Б, действующий на основании Решения Арбитражного суда Чувашии от 02.06.2014 №А79-7619/2013 сообщает, что повторные торги назначенные на 17.02.2015 г. не состоялись ввиду отсутствия заявок покупателей.

*Объявление*

«ХРЕСЧЕН САССИ»
Обществăпа политика хаçачĕ
Индекс 54838
Учредительсем – Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăйтытăмлă учрежденийĕ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР – В.В. ТУРКАЙ

РЕДКОЛЛЕГИ:
Е.Н. Николаева – пай редакторĕ
В.В. Петрова – корреспондент
С.Л. Павлов – тĕп редактор заместителĕ
Е.А. Трофимова – хаçат операторĕ

Номер редакторĕ – Е.Н. Николаева

www.hypar.ru,
e-mail: hreschen@cbx.ru

Редакципе издатель адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.
Телефонсем:
директор-тĕп редактор – 56-00-67,
тĕп редактор çумĕ – 62-04-54,
пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68,
реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70.
Факс (8352) 62-50-06

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305 № регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла.
17 сехетре алă пуснă.
Заказ 758
Тираж 3398

* Рекламăпа пĕлтерӳсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерӳсемшĕн вĕсене паракансем яваплă.